0-7А
23265 -чув.

ПЕТР ОСИПОВ



# Пьесăсем

Чăвашсен шурăмпуç çăлтăрне —
«Нарспи» авторне асăнса çыратăп.
П. ОСИПОВ

*Хусан, 1925 ç.*

# АЙТАР

Прологлă, 5 пайлă драма

## Драмăри çынсем:

**Сентиер** — пĕчĕкренпех тăлăх ÿссе çитĕннĕ, ашшĕ пекех вĕри юнлă ача.

**Сентиер амăшĕ** — пысăк хурлăхпа ир ватăлнă хĕрарăм.

**Улай** — Сентиер юлташĕ, хастарскер.

**Ахтупай** — вăтам хресчен, улпутсене юраса пуянтарах пурнăç шыракан килйыш пуçĕ.

**Ахтупай карчăкĕ** — «ашшĕнчен» иртеймен мĕскĕн хĕрарăм.

**Пинерпи** — кив пурнăç пусмăрĕнчен савнипе пĕрле çăлăнăç шыракан çитĕннĕ хĕр.

**Пинерпи шăллĕ** — пĕчĕк ача.

**Сернюк** — Пинерпи тантăшĕ.

**Айтар** — Кĕтерне патша вăхăтĕнче улпута тухнă чăваш.

**Мăн кĕрÿ** — Айтар çывăхĕнчи ватă йăлаçă.

**Итупай** — Айтарпа пĕрле ĕмĕрне иртterекен ватă салтак.

**Пичура** — Айтарăн шанчăклă çынни пулнăскер, каярахпа ăна хирĕç пырать.

**Çамрăк хуралçă, кĕçĕн кĕрÿ, вăйă ачисем, хĕрсем, туй халăхĕ.**

## СЕНТИЕР ÇЕМЕНĔН ХАЛАПĔ

(Умсăмах вырăнне)

...Пулнă, тет, ĕлĕк-авал Айтар ятлă чапа тухнă пĕр чăваш... Пулнă, тет, çав Айтарăн хушка пуçлă пысăк усал вăкăр. Çав вăкăр мĕскĕн чăваш ĕçхалăх хушшинче çирĕм çула çитиччен алхасса çӳренĕ, тет... Хуçи те унăн, хаяр Айтар, вăкăрĕ хыççăнах ĕçхалăхне сăтăр туса çӳренĕ, тет... Çав вăкăр ялан ирĕкре çӳренĕ, ăна никам та тивме хăйман... Айтарăн ирĕкĕ Кĕтерин патшаран пулнă, тет. Ялан хĕсĕк пурнăçра пурăннă чăваш ĕçхалăхĕ час-часах пăлханнă. Çавсене пусарма пулăшнăшăн майра-патша çав Айтара улпута кăларнă, тет. Çав майпах тата Кăканарпа Энĕш шывĕ хĕрринчи вăрманпа улăхсене те ĕмĕрлĕхех Айтар улпута пилленĕ, тет...

Çав вăхăтсенчех аслă вăрман ăшĕнче пĕр кӳлĕ çуталса выртнă, тет... Çав кӳлĕрен, çĕлен пек авкаланса, çырмасен тĕпĕпе куççуль пек тăрă шыв сăрхăнса юхнă, тет. Кӳлĕ хĕррипе çеçенхир симĕсленнĕ. Çав кӳлĕрен тухакан юханшыв хĕрринче, ватă йăмрасем айĕнче пытанса, пĕр пĕчĕкçеç ял хăйĕн ĕмĕрне ирттернĕ... Каярахпа вăл яла, Айтар пек улпутсен пусмăрне тӳсеймесĕр ирĕке тухма тăрăшнăшăн, патша указĕ хушнипе тĕппипех çунтарса янă, тет, кĕлне çил вĕçтерсе пĕтернĕ, халăхĕ, хăтлăх шыраса, тарăн шырлансене сапаланса пытаннă... Çав çынсенчен пĕри пирĕн ватă ĕмпичей Сентиер пулнă. Ашшĕнчен вăл кăкăр ачиллех юлнă, тет. Пугачев пăлхавне хутшăннăшăн Сентиер ашшĕ хăйĕн пуçне Кĕтерин патшана пилленĕ. Çапла вара, чухăн тăлăх ача Сентиер хăйĕн ватă амăшĕпе пĕрле мулкач куçĕ пек пĕчĕк чӳречеллĕ хура пӳртре ӳснĕ, тет. Унăн та ĕмĕрĕ ăраскалсăр иртнĕ тетчĕç пире асаттесем... Сĕм вăрман унăн хăтлăхĕ пулнă, тетчĕç. Çапах та ашшĕшĕн вăл тавăрнă — Айтара пĕтерме ĕлкĕрнĕ... Çав авалхи паттăрăн чаплă йăхĕ пулатпăр эпир, ачасем, çавăн ячĕпе мана та Сентиер Çеменĕ, теççĕ...

# ПРОЛОГ *.

Залра тĕттĕм. Фанфара калани илтĕнет. Вара граф О... чаршав умне тухса çак манифеста вулать, ун çине уйрăм çутă ӳкет.

«Божиею милостию, Мы, Екатерина Вторая, императрица и самодержица всероссийская, и пр. и пр. и пр. объявляем всенародное известие.

Всему свету ведомо есть, и многими опытами дел наших повсюду доказано, что мы, приняв от промысла божия самодержавную власть Всероссийской империи, главнейшим правилом в царствование наше положили, пещись о благосостоянии вверенных нам от всевышняго верноподанных, по намерениям и в`угодность подателя всякого блага творца, несмотря ни на какой род препятствия. Мы жизнь нашу посвятили к тому, чтобы доставить в Империи нашей живущим всякого состояния людям мирное и безмятежное житие.

Во время таковое и видя единственное стремление ума нашего довести Империю делами подобными до высшей степени благосостояния, кто не будет иметь праведного омерзения к тем внутренним врагам отечественнаго покоя, которые, выступя из послушания всякаго рода, дерзнули, во-первых, поднять оружие противу законной власти, пристали к известному бунтовщику и самозванцу Донскому козаку Зимовейской станицы Емельке Пугачеву; а потом обще с ним через целый год производили лютейшие варварства в губерниях Оренбургской, Казанской, Нижегородской и Астраханской, истребляя огнем церкви божия, грады и селения, грабя святых мест и всякаго рода имущества, и поражая мечом и разными ими вымышленными мучениями и убийством священнослужителей и состояния вышняго и нижняго обоего пола людей.

Помянутое следствие злодейских дел, касающихся до сего бунта, от самаго начала производили по повелению нашему Генерал-Аншеф Князь Михайло Волконский и Генерал-Майор Павел Потемкин в царствующем граде Москве.

Во исполнение обнародованнаго нами декабря 19 дня 1774 года Манифеста, в Правительствующем Сенате обще с членами Святейшаго Синода, первых трех классов Персонами и Президентами коллегий о бунтовщике,

* Ку пролога сцена валли нумай кĕскетес пулать. *(П. О.)*

самозванце и государственном злодее Емельке Пугачеве и его сообщниках сентеция заключена.

Сей злодей, бунтовщик и губитель в присутствии тайной Московской экспедиции допрашиван, и сам показал, что он подлинно Донской козак Зимовейской станицы Емелька Иванов сын Пугачев, узнав несогласие между яицких козаков, положив первую искру пожара, с готовою и отборною шайкою отважился объявить себя под высоким названием в бозе почивающего Государя Императора — Петра III, дабы пользуясь простотою, умножать свою сволочь, нужную ему к разбойническим намерениям.

Таким образом, предуспев собрать некоторое число содейственников богоненавистному предприятию своему, дерзнул обще с ними поднять оружие противу отечества. Повсюду, где только сей предатель и злодей коснулся, следы варварства его остались. Опустошение многих жилищ каждое благое сердце приводит в содрогание, и кровь, багрившая землю и пролитая его мучительной рукою, дымится и вопиет на небеса об отмщении.

Забыв закон всемогущаго Господа и Творца, явился он преступником перед самим богом, презрев присягу монаршей власти, сделался не только изменником, но похитив имя Монарха, стал возмутителем народа. Разорял он храмы Божии, разрушал святые алтари и жертвенники, расхищал сосуды и все утвари церковныя, и поругал святыя иконы, не ощущая в душе своей ни мало не токмо священнаго благоговения к таковым вещам, где жертва приносится Всевышняму Создателю, искупившему спасение наше кровию Спасителя Христа, но ниже содрогания.

Сего ради находя дело в таких обстоятельствах, сообразуяся нашему милосердию, сострадательному и человеколюбивому сердцу, и, наконец, рассуждая, что закон и долг требуют правосудия, а не мщения, нигде по христианскому закону несовместнаго, единодушно приговорили и определили за все учиненные злодеяния бунтовщику и самозванцу Емельке Пугачеву, в силу прописанных Божеских и Гражданских законов учинить смертную казнь, а именно: четвертовать, голову воткнуть на кол, части тела разнести по четырем частям города, и положить на колеса, а после на тех же местах сжечь главнейших его сообщников, способствующих в его злодеяниях:

1. Яицкаго козака Афанасия Перфильева четвертовать в Москве.

2. Яицкому козаку Ивану Зарубину отсечь голову и взоткнуть ее на кол для всенароднаго зрелища, а труп его сжечь со эшафотом купно. И сию казнь совершить в Уфе, яко в главном из тех мест, где все его богомерзкия дела производимы были.

3. Яицкаго козака Максима Шигаева, Оренбургскаго козачьего сотника Подурова и Оренбургскаго неслужащаго козака Василия Торнова повесить в Москве.

4. Яицких козаков: Василия Плотникова, Григория Закладнаго, Мещерятскаго Сотника, Канзафера Усаева и Ржевскаго купца Долгополова — всех пятерых высечь кнутом, поставить знаки и, вырвав ноздри, сослать на каторгу, и из них Долгополова сверх того содержать в оковах.

Определенную злодеям смертную казнь в Москве учинить на болоте сего Генваря 10 дня.

Мы всеусердно Бога молим и просим, да отвратит впредь мечь гнева своего от врученной нам его же премудрым промыслом Империи, да восстановит паки повсюду мирное и безмятежное житие, и да укрепит всех, в оной живущих наших верноподданных и нас самих во всех ему Творцу угодных христианских добродетелях.

Под сим подписано: *Екатерина*».

Чаршав уҫӑлать. Кӗтерин патша тронӗ умӗнче Айтар пуҫне чиксе чӗркуҫленсе ларать: унӑн тумӗ — чӑвашла. Пӗр ҫын Айтара ҫӗнӗ тум тата пистолет парса парнелеме хатӗрленсе тӑрать. Граф О... малалла Кӗтерин патша указне вулать:

«В первом послания первоверховнаго Апостола Петра сказано: «Бога бойтеся, Царя чтите, раби повинуйтеся во всяком страхе владыком не токмо благим и кротким, но и строптивым», ибо, как в книге премудрости Соломоней написано: «Царем даржава дана есть от господа и сила от Вышняго».

Узаконение же наше гласит: «Кто уведает, что един или многие нечто вредительское учинить намерены, или имеет ведомость о шпионах, или иных подозрительных людях и о том в удобное время не объявит, тот имеет быть живота лишен».

Сие уразумели не токмо верноподданные во Христе

Ея Императорскаго Величества премудрой Екатерины, но и инородцы, еще в православие не обращенные.

Сей раб и верноподданный Ея Императорскаго Величества инородец чуваш деревни Акчура уезда Чебоксарскаго, губернии Казанской Биктемира сын Айдар, ныне новокрещенный Василий, искреннее чувство верноподданнаго сына Отечества проявил и, праведным мщением противу дел изверга человеческаго рода Емельки Пугачева возбужденный, в удобное время объявил о бунтовщиках главарях из инородцев уезда Чебоксарскаго слуге Ея Императорскаго Величества храброму полковнику Михельсону, а через онаго Генерал-майору Потемкину.

В описании, собранном поныне из ведомостей разных городов, сколько самозванцем и бунтовщиком Емелькою Пугачевым и его злодейскими сообщниками осквернено и разграблено божиих храмов, также побито дворянства, духовенства, мещанства и прочих званий людей с показанием, кто именно и в которых местах, по Чебоксарскому уезду значится:

Ворвавшись в город, и, входя во храмы Божии в шапках, со оружием, грабили и выгоняли укрывающихся тамо людей, а именно:

В селе Сретенском, в селе Введенском, в селе Богоявленском, в селе Успенском.

В оных церквах злодеи не только грабили и убивали, но и святые иконы кололи и утварь церковную раздирали.

В Чебоксарском уезде убито до смерти:

Чебоксарской морской инвалидной команды: капитан с сыном, прапорщиков два, подпрапорщиков один, штатной команды солдат один, прапорщик Иван Тихомиров с женою его, Экономическаго правления копеист один, престарелых матросов четыре, да молодой один, дьяков два, купец один.

Все злодеи сих мерзких действ и губители многих невинных людей ныне по указу Ея Императорскаго Величества Самодержицы Всероссийской казнены.

Стараниями Премудрыя Монархини в пепел обращенные грады и селения ободрены уже примером многих других, в лепоту облеченных градов, утешены и призрены великия многоязычныя племена нашей Империи.

В сей день перед престолом Ея Императорскаго Величества Самодержицы Всероссийской представший

верноподданный сын Айдар, ныне новокрещенный Василий, благочестиво испытывает высокоматерное милосердие и попечение великой Монархини о благосостояния вверенных им от Всевышняго верноподданных.

По указу Ея Императорскаго Величества Самодержицы Всероссийской, объявлением сообщников Емельки Пугачева безпримерный подвиг и усердие перед Отечеством проявивший, Биктемира сын Айдар, ныне новокрещенный Василий, даруется именем Айдаров Василий, Селение Акчура впредь именовать Айдарово. Отдать в вечное и бесспорное владение луга по реке Аниш и луга окрест онаго селения. Инородцам-чувашам, верным Василию Айдарову, к крещению принуждения отнюдь никакого не чинить, но поступать в том по образу апостольской проповеди со всяким смирением, тихостью и кротостью.

Жаловать грамотой и оружием».

Хатĕрленĕ тумпа пистолета илсе, Айтара тыттарать. Музыка туш вылять.

Чаршав

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Чаршав уçăличченех çамрăксем юрлани илтĕнет. Урам. Пĕр енче хĕрсемпе каччăсем каска-пĕренесем çине пуçтарăнса ларнă. Тепĕр енче Ахтупай çурчĕ. Қаçхине. Уйăх çути ял çине ӳкнĕ. Хĕрсемпе каччăсем çĕрĕ памалла (тункăсла) выляççĕ. Мăйăр çиеççĕ, ахăлтатаççĕ, пĕри çĕрĕ валеçет. Пурте юрлаççĕ.

Ким чечек, ким чечек,
Қилме-кура пĕр-кура,
Сала-сала салашки,
Эс те яш, эп те яш,
Атя иккĕн пĕр пулар, Янтупай.
Қил качча, кил качча,
Қилме-кура пĕр-кура,
Чалма-чалма чаштирек,
Алтан якăш, пыл якăш,
Пар-ха пире пĕр хĕрне вылямa.

Я н т у п а й. Тункăс, камра çĕрĕ — туп!

С е р н ю к. Қамра-ши?

С а с ă с е м *(улталаса)*. Ак кунта... Манра... Манра вăл.

Сернюк. А, Сехипе пăхмиш пулса ларать, çавăнта пуль-ха. Сехипе, тух!

Сехипене туртса кăларма пикенет, анчах ун вырăнне Сентиер тухать. Пурте кулаççĕ.

Сентиер. Ай-ай, Сернюк, питĕ чее-мĕн эсĕ. Шăпах пĕлчĕ. *(Кулать.)*

Сернюк. Қапла эпĕ ыранччен те тункăсран тухаймăп, хăямат.

Сентиер. Қачча кайиччен тухатăн. *(Çĕрĕ парать.)*

Сернюк. Кунче пĕлеймесен, выляма пăрахатăп.

Улай. Ĕлĕк-авал пăрахнă, тет.

Сентиер *(çĕрĕ парса пĕтерсе)*. Ну, тункăс, кала — камра çĕрĕ?

Сернюк. Улай, санра, тух!

Улай. Манра çĕрĕ тавраш çук вара.

Сернюк. Қуртăм, куртăм — пур. Кăтарт аллуна. *(Пырса пăхать.)*

Улай. Акă, кур.

Сернюк. А, пур, пур!.. Тух часрах! *(Туртса кăларать.)*

Улай. Хăрăк мăйăр тыттарса хăварнă та, çĕрĕ панă, теççĕ. Ну и самана!

Сасăсем. Чимĕр-ха, ачасем, выляма пăрахсан авантарах мар-ши?

Сернюк. Çапла пулĕ. Эп тункăсра чухне никам та пăрахасшăн мар, халь хăй лекрĕ те, аванах та мар-и? Çук, тункăсран тух — вара пăрахатпăр.

Улай. Тĕрĕс калатăн, Сернюк. *(Çĕрĕ валеçет.)* Ват хĕрсем калани тĕрĕс.

Пурте кулаççĕ.

Тьфу!.. Ваттисем калани тĕрĕс: аптранă кăвакал кутăн чăмнă, тет; кулакана... ăçта çыпăçнă тет-ха?

Сентиер. Хăвăнне çыпăçмасан юрать... А ну, Çилтепи, тух-ха кунта. *(Тӳрех пырса туртса кăларать.)*

Çилтепи. Манра çук.

Сентиер. Парам сана çук! *(Ирĕксĕр туртса кăларать.)*

Улай. Қаларăм сире, ваттисем калани тĕрĕс тесе.

Пурте ахăлтатса кулаççĕ.

Сентиер. Питĕ тĕрĕс, калама та çук. Шăп хăйне

пырса çыпăçрĕ. Ăçта-ха, курăр, нумай çыпăçнă-и? Ачасем, тытăр!

Ачасем сиксе тăраççĕ, хĕрсем кăшт ларса юлаççĕ.

Улай. Ĕлĕк-авал тытнă, тет!

Улай тарать, пурте кула-кула хыçалтан чупаççĕ, хĕрсем хăйсем тĕллĕн тепĕр еннелле саланаççĕ.

Янтупай (*юлташсене каялла çавăрса*). Эй, ачасем, хĕрсем килелле тараççĕ, ярас мар!

Каялла çаврăнса хĕрсем хыççăн чупаççĕ, Сентиер юлать. Сцена хыçĕнчен юрă илтĕнет.

Çерем (те) ути,
Çĕр çырли (те)
Татрăм çиес (те) килнĕрен;
Ах, вăйăçăм, чунăмçăм (та),
Тухрăм выляс (та) килнĕрен.
Кĕске (те) кĕске халата (та)
Кĕске çĕртен (те) сыпăрах,
Пирĕн (те) вăйăа тиркесен (те),
Хăвăр пуçласа (та) хă(вă)р калăр.
Халат (та) кĕсйи тарăн мар (та).
Мăйăр яма (та) пит аван;
Пирĕн (те) ач(а)сем вĕçкĕн мар та,
Вăй(ă) выляма (та) пит аван.

Сентиер (*шухăшлă*). Темĕн чухлĕ манас тесен те, пуçран шухăша кăларса ывăтаймастăп. Ах, Пинерпи! Қамăн ячĕпе çуралнă-ши эсĕ, камăн кичем пурнăçĕн шурăмпуç çăлтăрĕ пулса тăрăн-ши? Камăнне пĕлместĕп, анчах маншăн маррине сисетĕп. (*Кантăк патне пырса вăрттăн пăхать, пӳртре хăй çути пур.*) Вăл пĕчченех. Ашшĕсем пӳртре курăнмаççĕ. Кĕрсен мĕн тейĕ-ши? (*Кĕме тăрать, анчах чарăнать.*) Çук, шурă пӳрте кĕме пире пӳлĕх хушман!.. Пирĕн пурнăç — хура пӳртре. Пирĕн ĕмĕр — хĕн-хур асапра. (*Кăшт айккинелле кайса.*) Ах, мĕншĕн манăн чĕре сикет-ха? Мĕншĕн куççем Пинерпиех курасшăн? (*Кайма тăрать, хыçалта юрлани илтĕнет.*) Çук, манас, манас... Авă, ачасем юрлаççĕ — çавăнта, тен, çăмăлтарах пулĕ! (*Каять.*)

Пинерпи кантăка уçса пăхать те, Сентиере курса, шăппăн чĕнет.

Пинерпи. Сентиер, Сентиер!

С е н т и е р (*сасартăк çаврăнса*). Пинерпи! (*Чупса пырать.*)

П и н е р п и. Ах, Сентиер, ман санпа калаçмалли питĕ нумай: ăçта пĕрле пулса калаçăпăр-ши?

С е н т и е р. Пинерпи, аçусем сисиччен тух урама.

П и н е р п и. Хăратăп: атте мана питĕ сыхлать, ниç-та та кăлармасть.

С е н т и е р. Халь килте çук вăл, тăвалла кайнине куртăм.

П и н е р п и. Вăл Пикмуç пичче патне кайрĕ те, нумай тăмастăп, терĕ, ниçта та ан тухнă пултăр, терĕ; анне юнашаррисем патĕнче.

С е н т и е р. Эпир нумай тăмăпăр.

П и н е р п и. Эппин, пĕр самантлăха тухам-ха. (*Тухать.*)

С е н т и е р (*хирĕç чупса пырать*). Авă унта, пӳрт айккине ларар.

Кайса ларaççĕ.

П и н е р п и. Ах, Сентиер, хăçантанпа эпĕ калас сăмаха санран пытарса усратăп.

С е н т и е р. Пĕлетĕп, Пинерпи, каламасăр та; аçусем качча парасшăн сана.

П и н е р п и. Кама?!

С е н т и е р. Камне пĕлместĕп, анчах ман пек чухăнчахăна мар ĕнтĕ.

П и н е р п и. Эх, Сентиер, сана эпĕ ятне калама та хăратăп.

С е н т и е р. Кама?

П и н е р п и. Айтара...

С е н т и е р (*сиксе тăрса*). Айтара? Таврари вăрă-хураха! Мĕн чухлĕ улăх, мĕн чухлĕ çĕр тыта-тыта илчĕ вăл хамăр таврари ялсенне, çавна эсĕ качча каясшăн?!

П и н е р п и. Ах, Сентиер, епле чĕлхепе хăйса калатăн эсĕ? Кам вырăнне шутлатăн мана? Мĕнле пуçпа тухăп эпĕ ун пек çынна?

С е н т и е р. Пуянпа вăрă-хурах — икĕ пуçлă вутçĕлен, эпир — уй кăткисем çеç. Анчах асту, Пинерпи: кăткăсем те, çилленсен, хăйсен йăвишĕн пуçĕсене хĕрхенмеççĕ. Айтар чăнахах пирĕн яла килсе çĕмĕрсен, эпĕ те хамăн пуçăма хĕрхенмĕп!

П и н е р п и. Сентиер, Сентиер!.. Ăна ку таранччен пĕр чăваш та хирĕç тăрайман, теççĕ, ялсене пынă чух çухрăмран çăкăр-тăварпа кĕтсе илеççĕ, теççĕ.

Сентиер. Мĕншĕн сана сăнаса хунă-ха вăл, ăçтан пĕлет вăл сана?

Пинерпи. Пĕлместĕп, анчах иртнĕ эрнере пирĕн пата икĕ çын килсе кайрĕç — Айтар çыннисем, терĕç. Аттене çапла каласа хăварнă: хурăнташлă килĕшсе пурăнас тесен — хĕрне пар, памасассăн — халăх ути ыранах Айтар аллинче пулать, тенĕ.

Сентиер. Аçу вĕсене мĕн тесе каланă?

Пинерпи. Мĕн каланине пĕлместĕп, анчах çитес эрнере туй пуласси не лайăх пĕлетĕп. *(Йĕрет.)*

Сентиер. Çитес эрнере!.. Эх, Пинерпи! Çитес эрнере эсĕ манăн тăшман пулатăн...

Пинерпи. Сентиер, Сентиер! Мĕншĕн апла калатăн? Санран урăх эпĕ никама та юратманнине эсĕ пĕлетĕн, çапах санăн тăшману пулма тивĕçлĕ-ши эпĕ? *(Йĕрет.)* Епле аттене хирĕç пырас-ха манăн, Сентиер?..

Сентиер. Çук, Пинерпи, эсĕ мана юратмастăн: юратас пулсан, Айтара качча каймăттăн, аçунтан та хăраса тăмăттăн.

Пинерпи. Эх, Сентиер, хăвăн савнийĕн хуйхине пусарса йăпатас вырăнне çак сăмахсемпе тата ытларах хурлантаратăн-çке эсĕ унăн мĕскĕн чĕрине. *(Хыттăн йĕрет.)*

Сентиер *(чупса пырса ыталать)*. Пинерпи, ан çилленсем: эпĕ сана хурлантарас теменччĕ, анчах тулса çитнĕ ăшчикĕмпе нимĕн тума пĕлместĕп. Халь çакăнта Айтар тăрас пулсассăн, эпĕ ăна хам аллăмпа хам пăвса пăрахăттăм! Айтара мар, пĕтĕм таврари асаплă пурнăçа çапса салатас килет!.. Ах, çут тĕнче! Мĕншĕн вĕçĕ-хĕрри курăнман çĕр çинче те пурăнма тăвăр-ши? Ăçта-ши ирĕк? *(Пинерпие ыталаса.)* Эх, Пинерпи... Çĕр çинче ирĕклĕ вырăн пулас пулсассăн е кайăк пек вĕçейрес пулсассăн — тухăттăмăр та кайăттăмăр çак усал тăшмансенчен хăтлăха. *(Шăппăнтарах.)* Итле-ха, Пинерпи, анатри чăвашсем пĕтĕмпех улпутсенчен тарса Юман шырланне пытаннă, теççĕ. Тарар-и эпир те çавăнта?

Пинерпи. Эпĕ хатĕр, Сентиер. Манăн пурпĕр пĕтес пулать: Айтара кайса пуçа çиййччен — савнипе пĕрле пĕтес.

Сентиер. Çук, эпир пĕтместпĕр, Пинерпи: пирĕн тус — вăрман, пирĕн кил — тарăн çырма, пирĕн пурнăç — хăтлăхра! Васка, савни: çичĕ ют сисиччен — çичĕ лаппа ÿкетпĕр. Эсĕ кĕрсе хатĕрлен, автан пĕрре авăтсас-

сăн, анкартине чупса тух. Ну, каяр, çынсем куриччен уйрăлар.

Пинерпи. Ах, Сентиер, тупайăпăр-ши хăтлăха?

Сентиер. Çине тăрсан, тупăпăр, савни!

Ыткăнса утаççĕ, сасартăк, Ахтупай килнине курсан, Сентиер урам урлă чупса каять. Ахтупай Пинерпи патне хыпаланса пырать. Сентиер тепĕр енчен сăнаса тăрать.

Ахтупай. Чим!.. Пинерпи?! Ӑçта тухса ларнă эсĕ? Аçу сăмахĕнчен иртес терĕн-и? Ых, йыт çиесшĕ пуçна!.. Час кĕрсе выртнă пултăр! Тепре каччăпа ларнине курсан — асту: хĕрне-мĕнне пăхмăп, кăвак хуппи кăтартăп. Ӑçта ларнă-ха эс унта, пӳрт айккинче, кала?

Пинерпи. Каламастăп.

Ахтупай. Каламастăн-и? Каламасан — калаттарăпăр! *(Хапха умĕнче выртакан хулă татăкне илсе хĕнет.)*

Пинерпи *(кăшкăрса)*. Çап!.. Хĕне, атте!.. Каламастăп.

Ахтупай. Ан çухăр, хĕрӳ-пуçу! Ялйыш умĕнче намăса кĕртес тетĕн-и е аçуна пĕтерес тетĕн? Айтар пĕлсессĕн, качча илме мар — пĕтĕм улăх утине тиесе кайĕ. Кала, намăссăр, кам пулчĕ вăл урам урлă чупса каяканни?

Пинерпи. Ятне каламастăп — вăл манăн савни. Айтара эпĕ каймастăп, атте. Пуян вăрă-хураха парса чапа тухăп тетĕн-и, е яту çĕресрен хăраса, пĕртен-пĕр хĕрне ĕмĕрлĕхе тĕтĕмсĕр вутта пăрахса çунтарăн-ши?

Ахтупай. Аплах усалланса кайнă-и-ха эсĕ, Пинерпи? Аçупа аннӳ ирĕкĕнчен ирте пуçларăн-и? Юрĕ! Атя-ха пӳрте, унта каласа парăн пĕтĕмпех. *(Сĕтĕрсе кĕресшĕн.)*

Пинерпи. Атте, хĕненипе эсĕ манран ыйтса пĕлес çук — пурĕпĕр каламастăп. Ӑçта пар мана, туй ту, ĕçĕр, юрлăр — анчах халех калатăп: Айтарпа эпĕ пурăнас çук. *(Ашшĕ аллинчен вĕçерĕнет.)*

Ахтупай. Ах, намăссăр йытă пичĕ, хăçантанпа эсĕ капла калаçма вĕреннĕ, е савни вĕрентрĕ-и? Ятне унăнне каламарăн, анчах эпĕ пурĕпĕрех ялйышсенчен те пулин ыйтса пĕлетĕп. *(Чупса пырса, аллинчен ярса илет.)* Час кĕнĕ пултăр пӳрте!

Пинерпи *(çăлăнать)*. Кĕместĕп пӳрте! Эсĕ мана пушăпа хĕнесе тĕпчесшĕн.

Ахтупай. Эй, карма ҫăвар! *(Ҫӳҫӗнчен ярса илет.)* Кăшкăрса ху тавра халăх пуҫтарас тетӗн-и, намăссăр? *(Чикелентерсе сӗтӗрсе килкартинелле илсе каять.)*

Пинерпи *(кăшкăрать)*. Эх, атте, ҫӳҫрен тăпăлтарма ҫуратрăр-и мана?

Ахтупай. Кӗр пӳрте, ан кăшкăр урамра.

Пинерпи. Кăшкăратăп!.. Хӗрне ашшӗ хӗненине пурте курччăр, курманнисем илтчӗр. Чаплă Айтарăн туйӗ те чаплă пултăр. Хӗне, атте... Хӗне хăвăн хӗрне лайăхрах: тен, сасса илтсе, савни хӗрхенӗ.

Сентиер, унччен сăнаса тăнăскер, тӳсеймесӗр чупса пырать.

Сентиер. Эпӗ кунта, Пинерпи.

Пинерпи *(ăна курса, тӳрех ун патнелле ыткăнать.)* Ах!.. Сентиер!..

Сентиер. *(Пинерпие хӳй ҫумне ҫупăрласа)*. Ахтупай пичче, хӗнесе эсӗ пире сивӗтес ҫук. Пинерпи — манăн савни.

Ахтупай. Пӳлӗхҫӗ сыхлатăрах! Мӗн куратăп! Тӗксӗм киремет ачи ман хӗре хапсăннă... Ман умра ыталанса тăраҫҫӗ, намăссăрсем... Эй, Пинерпи, ытлашши ан вӗҫ: эпӗ, халăх пуҫтарса, ҫӗре ҫыхса пăрахса хӗнеттеретӗп сире, иксӗре те. Халӗ пӗтӗм халăх ман алăра: эпӗ хӗре Айтара памасан — пӗрин те пӗр пӗрчӗ утă пулас ҫук, пӗтӗмпех Айтарсене каять.

Сентиер. Айтарсене? Ӗмӗр Айтарсенчен хăраса тăмалла-и пирӗн? Ялӗ-ялӗпе хирӗҫ тăрсан, эпир Айтара кăна мар, пӗтӗм улпутсене хирӗҫ тăма пултаратпăр.

Ахтупай. Ан сӳпӗлтетсе тăр, киремет ачи!

Хӗрне пырса туртса илет те Сентиере ҫухаран ярса тытать, лешӗ хăвăрт вӗҫерӗнет.

Сентиер. Асту, Ахтупай пичче! Ку таранччен ман алă ваттисем ҫине ҫӗкленменччӗ, анчах шăпи тулсан — эпӗ тиркесех тăмăп.

Ахтупай. Ах, ҫӳрме! *(Чупса пырса тепӗр хут Сентиере ярса илет.)*

Пинерпи. Атте, мӗн тăватăн эсӗ?.. Асу пур-и санăн?..

Сентиер *(Ахтупай аллинчен вӗҫерӗнсе, хирӗҫ тăма хатӗрленет)*. Юрӗ!.. Ахтупай пичче, эпӗ сана хирӗҫ тытмарăм, анчах тата тапăнсан — ватти-мӗнне тиркесе тăмăп.

Ахтупай. Хуп çаварна, киремет ачи! Акă ыранах халăх пуçтарттарса хĕнеттеретĕп сана. *(Пинерпие.)* Сана вара, чупкăна, çăрапа питĕрсе лартам! *(Тĕрте-тĕрте пÿртелле илсе каять.)* Ут, путсĕрскер...

Сентиер. Асту, Ахтупай пичче, Пинерпие пурпĕр хĕнеттерместĕп. *(Хăвăрт каять.)*

Пăртак тăрсан, пÿртре Пинерпи хыттăн йĕни илтĕнет. Çав вăхăтра Ахтупай карчăкĕ киле таврăнать.

Ахтупай карчăкĕ *(хыпаланса пÿрт умнелле утать)*. Пинерпи сасси мар пуль-çке?

Пинерпи, сасартăк хыттăн кăшкăрса, пÿртрен çăлăнса тухать те, амăшне курса, ун патне чупса пырать.

Пинерпи. Анне!.. Анне!.. Эсĕ те хĕрхенмĕн-ши?

Ахтупай карчăкĕ *(хĕрне ыталаса)*. Хĕрĕм... Пинерпи... Эпĕ хĕрхенмесен, кам хĕрхентĕр сана? *(Хăй те йĕрет.)*

Пинерпи. Атте мана, сутлăх тавар вырăнне хурса, çичĕ юта парасшăн, е эсĕ те, анне, мана савнинчен уйăрасшăн-ши?

Ахтупай урамалла хыпаланса тухать, аллинче чĕн пушă, кăмăлĕ кăшт çемçелнĕ.

Ахтупай. Карчăк!.. Ан пăс хĕре!

Ахтупай карчăкĕ. Ашшĕ!.. Çав териех хĕрĕн куççульне юхтарма Пинерпи çичĕ ютран килнĕ çын марçке... Сăмах витмен хĕре чĕн пушă витес çук.

Ахтупай. Чарăн, карчăк! Айтар камне чухлаймастăн эсĕ: хĕрне панипе эпир чухăна юлас çук; анчах Айтар кăмăлне тумасан, эпир ялĕпе пĕтетпĕр. Хамăршăн мар, халăхшăн пирĕн Айтарпа кĕрÿллĕ пулмалла.

Пинерпи. Эх, аттеçĕм, аннеçĕм! Мĕншĕн çуратрăр-ши мана; пĕртен-пĕр хĕрне юрататпăр тесе ÿстертĕр те халĕ çичĕ ютăн аллине паратăр. *(Хыттăн амăшне ыталаса йĕрет.)*

Ахтупай карчăкĕ *(хĕрхенсе)*. Юратнă Пинерпи хĕрĕмĕн ирĕкĕ — ашшĕн аллинче. Ашшĕнчен иртсе ялйыш ирĕкĕнчен малта пулма çук ĕнтĕ, итлесех пулать.

Ахтупай. Çитĕ, кĕрер пÿрте, çын илтсен, тем калĕ: пăсакансем тупăнĕç, юсаканĕсем пулмĕç.

Ахтупай карчăкĕ *(хĕрне çавăтса пÿртелле утать)*. Кĕрер пÿртелле, хĕрĕм... Лăплансам.

Пинерпи *(хыттăн йĕрсе пўртелле утать)*. Эй, аттеçĕм, аннеçĕм, сўнчĕ çамрăк ĕмĕрĕм: çутă тĕнче илемĕ ман пусăмшăн пулмарĕ.

Пиерпипе амăшĕ пўртелле кĕреççĕ. Ахтупай тўсеймесĕр хуйхăрса пуçне усса юлать, чĕн пушши аллинчен тухса ўкет.

Чаршав

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

### 1-мĕш картина

Декораци çавах. Урамра çамрăксем чупкалаççĕ. Ахтупай çуртнелле хăнасем кучченеçсемпе пуçтарăнаççĕ. Аякран туй çывхарса килет. Музыка туй кĕвви калать. Пăртак тăрсан, мăн кĕрў, такмак каласа, çенĕк умнелле пырать. Ун хыçĕнчен туй халăхĕ юрласа килет. Туя хирĕç Ахтупайпа арăмĕ тухаççĕ. Мăн кĕрў сăра куркине икĕ аллипе тытса çак сăмахсене çаптарать.

Мăн кĕрў[1]

Асăнни çичĕ кун,
Тухни виçĕ кун,
Утсем ырхан пулчĕç,
Çулсем хура пулчĕç;
Çитеймерĕмĕр вăхăта,—
Айăп ан тăвăр, хăта,
Тайма пуçăм сире.

Пуç таять.

Утмăл çухрăм утрăмăр —
Вăрман урлă каçрăмăр.
Çеçенхире тухрăмăр —
Çитмĕл çухрăм чупрăмăр.
Утмăл çухрăм утсемпе
Вăрман урлă каçнă чух
Пĕр пăлана куртăмăр:
Мăйраки ун çут ылтăн,
Чĕрне вĕçĕ çут кĕмĕл.
Мăйракипе шăйрать те

---

[1] Сцена валли мăн кĕрў сăмахĕсене нумай кĕскетес пулать; ку ĕçе режиссер хăйне кăмăла килнĕ пек тума пултарать.

*Автор.*

Тем вăрăмăш йĕр тăвать;
Чĕрнисемпе пусать те
Пире кайма çул тăвать;
Çав çулпала килтĕмĕр.
Çакă пирĕн туй халăх:
Пире айăп тумастра,
Кĕтсе хапăл тăватра?

Ахтупай

Пиртен айăп çук сире,
Кĕтсе хапăл тăватпăр.

Мăн кĕрӳ

Çитмĕл çухрăм чупнă чух
Çил çунатлă урхамах
Пирĕн умра курăнчĕ:
Пуçĕ пĕлĕте тивмест,
Ури çĕре перĕнмест,
Утни-юртни сисĕнмест;
Шыв пек юхать, çил пек вĕçет—
Çавăн çине утланса,
Килтĕмĕр-çке çак туя.

Çеçенхирĕн варринче
Çавра кӳлĕ пур иккен.
Çавра кӳлĕ варринче
Ылтăн юпа пур иккен,
Ылтăн юпа тăрринче
Ăмăрткайăк сас парать.
Ури унăн пăхăртан,
Çуначĕсем кĕмĕлтен,
Сăмси вĕçĕ шур ылтăн.
Пăхăр урипе тапать,
Кĕмĕл çуначĕпе çапать.
Сăмси вĕçпе вăй калать —
Çав вăйăпа килтĕмĕр.
Çав çулпала килнĕ чух
Хăтан ялĕ курăнчĕ:
Ялĕ пулчĕ хула пек;
Çурчĕ умне çитрĕмĕр —
Çурчĕ пулчĕ кантур пек;
Хапхи тăват юпаллă,

Виçĕ хупăллă,
Çийĕ калай,
Тăпси пăхăр,
Юпи мерчен,
Хапхи хуппи кĕленче,
Тыткăчисем кĕмĕлтен.
Хапхи çилпе шалтăртатать.
Хĕрӳ хĕвелпе ялтăртатать.
Хăта пире хапăл тăвать,
Хапха уçса кĕтсе тăрать.
Вăл хапхаран кĕрсессĕн,
Хăтан картиш пысăк-мĕн:
Вăтăр утăм урлăшĕ,
Утмăл утăм тăрăшшĕ;
Çавă утмăл утăмра
Утмăл ункă юпара.
Çавă утмăл ункăран
Пĕр ункине çак хăта
Пирĕн ырнă утсене
Кăкармашкăн памĕ-ши?
Кĕрӳ ыйтать, эпĕ мар.

Вĕçен ăмăрткайăк та
Уртăш йывăççи çине
Ларса канать. Çак хăтан
Аслă картиш варринче
Улт хăлаçлă пӳрчĕ пур:
Тултан сакăр кĕтеслĕ.
Ăшне кĕрсен — тăваттă.
Çав тăвата кĕтесрен
Çак туй халăхне тăма
Пĕр кĕтессине пама
Хăтан ирĕк пулмĕ-ши?

Ахтупай

Пиртен ирĕк, кĕрĕрех.

Мăн кĕрӳ

Çавă пӳртĕн ăшĕнче
Тăхăрвун тăхăр хăми пур,
Сакăрвун сакăр сакки пур,
Тăхăрвун тăхăр хăминчен

Пĕр хăмине çак хăта
Авалхи пек вылямa
Пире ирĕк памĕ-ши?

Пире кĕтсе, çак хăта
Туй халăхне ĕçтерме
Сăра тунă. Сăрине
Çичĕ пасма пĕçерсе,
Çич хут туса юхтарнă.

Тата нÿхреп тĕпĕнче
Пичетленĕ пичке пур;
Пички хĕрĕх кăшăллă.
Ик пăкаллă, тет, иккен:
Пĕр пăккине уçсассăн —
Симпыл юхать. Тепринчен —
Тутлă шерпет пĕрĕхет.
Çав симпылне ĕçсессĕн,
Ӳсĕрĕлсе каймалла.
Тутлă шерпет сыпсассăн —
Тутлăн калаçмалла, тет.

Ĕçкĕ ĕçме çак хăта
Чаплă çимĕç пĕçернĕ:
Çичĕ çулхи вăкăрне,
Çич çултанпа кĕтĕве
Çиччĕ кĕмен выльăхне,
Пирĕн Айтар туйĕ валли
Тытса пуснă, тет, иккен.

Унăн иккĕмĕш чыса
Хатĕрленĕ таки пулнă;
Пилĕк çулхи хура таки
Пилĕк кĕтĕве кĕмен:
Пуçĕпе те вăл сĕкнĕ,
Урипе те хыт тапнă!
Çав такана кăçалхи çул
Пирĕн Айтар туйĕшĕн
Тытса пуснă, тет, иккен.

Тата виççĕмĕш чыса
Хатĕрленĕ виç çулхи
Кăркки пулнă. Виç çулта
Виççĕ çĕре анмасăр,

Шав хуралтă тăрринче
Шулап тăрăх вĕçейсе,
Çунатланса çӳренĕ.
Çав кăрккана çил-тăвăл
Кăçалхи çул антарнă;
Хăта ăна çак туйшăн
Тытса пусса пĕçернĕ.

Ĕççе-çисе тăрансан,
Хăтан пирĕн туй валли
Улма пахчи пур иккен;
Улма пахчи варринче
Вĕри мунча пур иккен.
Мунчи уртăш йывăççи,
Çийĕ калай, чулĕ мерчен,
Ăшши шерпет, милĕкĕ пурçăн,
Валашки пăхăр, курки кĕмĕл.
Туй халăхне çак хăта
Çав мунчара кĕртесшĕн;
Çав мунчаран тухсассăн,
Пире чыса сĕнесшĕн.
Пирĕн хăта ырă çын,
Лайăх кăмăллă иккен:
Кам туя килменнине
Тепĕр хут чĕнме яма
Сарă ылтăн çилхеллĕ
Кĕмĕл улма чăпар ут
Крыльца умне кăкарнă.

Эй, хăта, тулчĕ-и кăмăлăр?
Кунтан ытла сăмахăм çук,
Сиртен ытла савнă çын çук.
Çитмен пулсан, çитерĕр,
Ытла пулсан, каçарăр.
Тав сана, тайма пуçăм!

Пуç таять.

Тайма пуçа хĕç витмен,
Сăмах сире витес çук.
Тав сире, тайма пуçăм!

Мăн кĕрӳ хайне панă сăрине ĕçет. Туй халăхĕ юрла пуçлать. Хăта, мăн кĕрӳ, туй халăхĕ — пурте пӳртелле кĕреççĕ. Пӳртре ташă пуç-

ланать. Урамра ача-пӑчасем калла-малла чупкалаççӗ, хӑшӗсем кантӑкран пӑхаççӗ, теприсем пӳртелле кӗреççӗ. Пӑртак тӑрсан, аякран шӑнкӑрав, туй юрри сасси, параппан çапни çывхарать. Айтар туйне хирӗç сӑрапа тухаççӗ. Çынсем туй курма нумаййӑн пухӑнаççӗ. **Айтар** чаплӑ дворян тумӗпе танлӑн утса килет. Хирӗç тухнӑ **Ахтупайпа карчӑкӗ** ӑна сӑра курки тыттараççӗ. Сӑрине ӗçсен, пӳртелле пит кӑмӑллӑн утать. Çамрӑксем параппан çапса ташлаттара пуçлаççӗ. Кӗçӗн кӗрӳ, хитре туй арӑмӗсене пуçтарса, вӗçкӗнле çӑмӑллӑн ташӑ пуçласа ярать. Каярахпа мӑн кӗрӳ, ытти ватӑраххисем те çӑмӑлланса ташша хутшӑнаççӗ.

Чаршав

## 2-мӗш картина

Декораци çавах. Урамра уйӑх çути. Ахтупай килӗнче юрлани, ташлани илтӗнет. Кантӑк анинче, пӳрт умӗнче ача-пӑчасем кӗшӗлтетсе çӳреççӗ. Çынсем хӑшӗ пӳртелле кӗреççӗ, хӑшӗ тухаççӗ. Пӳртрен юрӑ илтӗнет.

Тевет те тевет хуртпуççи *(2 хут)*,
Татс(а) илмеллех килн(ӗ) эпир *(2 хут)*,
Хӑтапала тӑхлача
Макӑртмаллах килн(ӗ) эпир.
Сӗтел ури тайличчен
Кӗмӗл укçа пан(ӑ) эпир.
Юман кашти тайличчен
Шурӑ пирне çак(ӗ)-и-ха?
Анкарти хыç(ӗ)нчи мулкачне
Хӑй шурӑран тытрӑмӑр,
Ай-хай, кинӗм Пинерпи,
Хӑй лайӑхран илтӗмӗр.

Сернюкпа Улай кула-кула пӳртрен тухаççӗ.

**Сернюк.** Ну-и туй та, Улай.

**Улай.** Калама та çук, Сернюк. Сана çавӑн пек качча парасчӗ, ура тупанӗ хӑпарса тухичченех сикӗттӗм ӗнтӗ туйра.

**Сернюк.** Ай, турӑ ан хуштӑрах Айтар пек çынна кайма.

**Улай** *(мӑшкӑлласа)*. Эй, кӗсел! Айтар пек пуянни лексессӗн, эс мар — эпӗ хам та пӗр шухӑшламасӑр пӗркенчӗк пӗркенсе йӗрӗттӗм.

**Сернюк.** Ун пек ват улпут лексессӗн, пӗркенчӗксӗр те выртса йӗрӗн.

**Улай.** Ытлашши юратнипе-и? Ха-ха-ха!..

С е р н ю к. Иккĕмĕш арăмне хĕнесе вĕлернĕ, теççĕ мар-и çавна?

У л а й. Куна мĕн тума илет тетĕн эсĕ? Паян туй тăвать те ыран арăмне йытă вырăнне кăкарса хурать.

С е р н ю к. Пĕтрĕ-çке Пинерпи, ашшĕ пиркиех пĕтрĕ.

У л а й. Ашшĕ пирки çеç мар, халăх пирки...

С е р н ю к. Мĕншĕн халăх пирки?

У л а й. Халăх пирки пулмасăр, Ахтупай Айтара халăх хушнипе парать — унсăрăн пирĕн улăхсем пĕтеççĕ.

С е р н ю к. Халăх тесе, Пинерпин çамрăк пуçне пĕтермелле-и?

У л а й. Самана çавăн пек ку чухне, Сернюк. Ну, кун çинчен туйра калаçмаççĕ. Итле-ха: эпир, пĕтĕм çамрăксем пуçтарăнса, Айтар туйне мăшкăл тăвас тетпĕр, эсĕ мĕн шухăшлатăн?

С е р н ю к. Ана мăшкăллама та хăрушă: унăн çиллине ку таранччен никам та çĕнеймен, теççĕ.

У л а й. Каччине хурламасăр нихçан та туй иртмест: çилленсессĕн, эпир те айнех пулмăпăр.

С а с ă с е м. Эй, эй, ачасем, Сентиер килет!

С е н т и е р кĕрет те аякра чарăнса шухăша кайса тăрать.

С е р н ю к. Пăх-ха, Улай, Сентиер мĕнле хуйха ӳкнĕ. Тӳсме çук тарăхса çитнĕ.

У л а й. Чим... Вăл эпир мĕн шухăш тытнине пĕлмест пулĕ-ха... Ана систерес пулать. Эсĕ, Сернюк, кĕрсе пăх-ха, тухма хатĕрленмеççĕ-и унта?

С е р н ю к пӳрте кĕрет. У л а й Сентиер патне каять, лешĕ каска çинче ларать. Сасăсем: «Хатĕрленеççĕ... Тухаççĕ... Парне япалисене йăтма хатĕрленеççĕ...»

У л а й. Сентиер, мĕн пĕр шарламасăр ларатăн? Кайча ун пек ларни килĕшмест.

С е н т и е р. Ах, Улай, эс пĕлесчĕ: манăн ăшра вут çунать, анчах тĕтĕм тухни курăнмасть. Ман вырăнта пулсассăн, эсĕ те пуçна усăттăн. Мĕн чухлĕ пуçран кăларса ывăтас тенĕ, çавăн чухлĕ ытларах пуçа çавăрать.

Пӳртре хĕр йĕрри илтĕнет.

Ах, Пинерпи, Пинерпи! Санăн савни арăслантан вăйсăр... *(Сасартăк сиксе тăрса.)* Çук!.. Эпĕ арăслантан хăрамастăп, ăна парăнмастăп. *(Кăшкăрса.)* Айтар-и, эпĕ-и — иксĕмĕртен пĕри пĕтес пулать! Эпĕ пĕтсессĕн — Пинерпи те пĕтет, анчах эпĕ çиеле тухсассăн — пирĕншĕн те уяв пулать.

Улай. Сентиер, эпир, пӗтӗм çамрӑксем пуханса, туйӑн юлашкине пӑсасшӑн.

Сентиер. Итле-ха, Улай: вӗлерсессӗн ӑна — мӗн пулӗ-ши?

Улай. Ырри пулас çук, мӗншӗн тесен ваттисем ун майлӑ; ӑна вӗлерсен, унӑн ывӑлӗсем ашшӗнчен те ирттерӗç. Туйне çапах та мӑшкӑллас. Эпир шӑп тухса каяс умӗн урапи пӑтисене йӑлт кӑларса ывӑтса пӗтерессӗн — ял варринче йӑвана-йӑвана ӳкчӗр.

Сентиер. Чим, Улай, тавай сисиччен Айтар лашин сӳсмен пӑявӗсене касса пӗтерер. Пурӗпӗр вӑрçӑ пулатех. Кам каснине пӗлес çук — халӑх кӑшт ыйхӑран вӑрантӑр. Айтар çыннисем ӳсӗр пулаççӗ, пирӗн халӑх — урӑ. Эпир çине тӑрсан, тен, халӑх та пирӗн майлӑ пулӗ.

Улай. Çамрӑксемшӗн иккӗленмелли çук, анчах ваттисем çинче шанчӑк сахал, хӑранипе Айтара юрас тейӗç.

Сентиер. Халӑха пуçласа паракан çук: пӗрер хӑюллӑрах пуçлӑх пулсассӑн, вӑл хӑех ыйхӑран вӑранать.

Улай. Вӑрансан юрать те, вӑранмасан...

Сасартӑк сасӑсем: «Тухаççӗ!.. Тухаççӗ...»

«Тухать-и те тухмасть-и» юрласа, пӳртрен халӑх тухать.

Сентиер. Ав, ав тухаççӗ. Айтар парне йӑтма хатӗрленет, юрлаççӗ.

Улай. Эсӗ ан курӑн, Сентиер! Кирек мӗн пулсан, Ахтупай тӳрех сан çине шухӑшлать... Пытан! *(Уйрӑлаççӗ.)*

Туй халӑхӗ икӗ пая уйрӑлса тухать; пӗр ушкӑнӗ «Хӗрçум юрри» юрлать, тепӗр ушкӑнӗ — «Туй юрри». Айтар çыннисем пӑлтӑртан парне çӳпçисем йӑтаççӗ.

## Хӗрçум юрри

Хура сысна хушка пуç,
Пирӗн йысна кукша пуç,
Ил-ха, йысна, çӗлӗкне,
Кукша пуçна курар-ха.
Ула сысна мӑштӑркка,
Йӑран урлӑ каçаймасть,
Пирӗн йысна мӑшӑлкка,
Алӑк урлӑ каçаймасть.

Пирĕн тантăш таврашне
Ал çумасăр ан тытăр,
Пирĕн тантăш тухйине,
Пуç çумасăр ан тăхнăр.

Сарă пурçăн пиçиххи
Тантăш пил(ĕ)кне явăнчĕ,
Явăнчĕ те çыхăнаймарĕ *(2 хут).*

Ялти ача — сар ача
Тантăш пуçне çавăрчĕ,
Çавăрчĕ те илеймерĕ *(2 хут)*

Хура пурçăн пиçиххи
Тантăш пилĕкне явăнчĕ,
Явăнчĕ те çыхăнчĕ *(2 хут).*
Айтар каччă — ват каччă
Тантăш пуçне çавăрчĕ,
Çавăрчĕ те илейчĕ *(2 хут).*

Пирĕн тантăш шуралнă,
Шухăшласа шуралнă;
Пирĕн йысна хĕрелнĕ,
Эрех ĕçсе хĕрелнĕ.

Саркайăкăн савнасси —
Улăхути çуличчен;
Пирĕн тантăш савнасси —
Ашшĕ килĕнчен тухиччен.

## Туй юрри

Акă тухать çӳпçийĕ,
Вĕт чул чиксе хунăскер.
Акă тухать тӳшекĕ,
Тăмана тĕкĕнчен тунăскер.
Акă тухать кăçачĕ,
Йыт çăмĕнчен тунăскер.

Пирĕн инке пуласси,
Купăста татма тухсассăн,
Хупах татса кĕнĕ, тет,
Çавăнпа яшки купăстасăр.

Пирĕн инке пуласси,
Сухан татма тухсассăн,
Хăях татса кĕнĕ, тет,
Çавăнпа яшки сухансăр.

Çакă ялăн хĕрĕсем —
Кăптăр-кăптăр шыв курки,
Эпир килсе кĕнĕ чух
Кăптăртатса çӳреççĕ.

Юлашкинчен, çӳпçе илсе тухсан, хĕрсем çапла каласа юрлаççĕ:

Çӳпçе укçи çитмĕл пус,
Хĕрне пама — хĕрĕх пус:
Çав укçана памасан,
Хĕрне парса ямастпăр.

Ку сăмахсене каласа юрланă чух хĕрсем çӳпçе çине улăхса тăраççĕ. Айтар кӳшелккинчен вак укçа кăларса сапать те, вара хĕрсем япаласене йăтма чарăнаççĕ.

Парне япалисене йăтса пĕтерсен, туй халăхĕ юрласа пӳртелле кĕрет. Пĕчĕк ачасем кĕшĕлтетсе çӳреççĕ.

П и н е р п и ш ă л л ĕ *(пĕчĕкскер, хĕпĕртесе сиксе калать)*. Кайса ларатăп та арча çине, пĕр пысăк укçа памасан, йыснана хапха уçса кăлармастăп.

С е р н ю к. Эсĕ унтан ытларах шакка: «Тавай кĕмĕл укçа!» те. Ну, чуп, кайса лар хăвăртрах.

П и н е р п и ш ă л л ĕ чупать, ун хыççăн кăшкăрса пĕчĕк ачасем те чупаççĕ.

У л а й *(хăй тĕллĕн)*. Ăçта-ши Сентиер? Пиллесе пĕтериччен ĕçе туса хурас пулать. *(Хыçалалла чупать.)*

С а с ă с е м. Пиллеме лараççĕ... Пиллеççĕ.

Пӳртре шăп пулать, юрлама чарăнаççĕ. С е н т и е р п е У л а й кĕреççĕ.

У л а й. Эс пытанарах çӳре, Сентиер. Вăрçă пулатех; анчах сансăр тусан авантарах — никам çине йăвантарма пулмасть.

С е н т и е р. Юрĕ, эпĕ аякран сыхласа тăрăп — курăпăр, халăх кам майлă пулĕ. Эппин, эс кай, эп пытанса сăнам. Çĕççӳ çивĕч-и сан? Ме, хамăнне парам. *(Парать.)*

У л а й. Кӳр. Пĕри касмасан, тепри касĕ. Сиссе ĕлкĕриччен пĕр сӳсмен пăявĕ те юлмĕ.

Сентиер. Ах, юлашки хут Пинерпипе курса калаçаясчĕ...

Улай. Эпĕ унпа калаçрăм. Пĕр курка сăра ĕçтерчĕ, йĕре-йĕре сана асăнчĕ... «Атте-аннен хыт чĕри манăн пуçа çирĕ»,— тет... Ну, юрĕ, эп карăм.

Йĕри-тавра пăхкаласа, сўсмен пăявĕсене касма чупать, пўртрен хĕр йĕрри кĕвви илтĕнет.

Сентиер *(хăй тĕллĕн)*. Юлашки çĕр савни килĕ умĕнче тăратăп: икĕ юратакан чĕресем паян кунтан пĕр-пĕринчен уйрăлаççĕ. Мĕн пирки? Ĕмĕр хуйхă курма çуралнă пирки. Ах, Пинерпи, савнă чунăм. Ĕмĕрлĕхех уйрăлăпăр-ши?

Сентиер шухăша каять; çав вăхăтра Пинерпи хăйĕн тантăшĕсене çенĕк умĕнче йĕре-йĕре юлашки хут сăра ĕçтерет.

Пинерпи *(Янтупая ĕçтернĕ чух юрласа)*.

Ах, тантăшăм Янтупай, *(2 хут)*
Çын-çын урлă курăнан,
Мана саван пулсассăн,
Пĕрер курка ĕçсе пар.

Сăрине ĕçнĕ чух Янтупай курка ăшне укçа ярса парать. Сасартăк Сентиерпе Пинерпи куçĕсем тĕл пулаççĕ. Вара Пинерпи çапла каласа йĕрет:

Ик шур тутăр пĕр вĕçрен *(2 хут)*,
Хачă касрĕ, уйăрчĕ;
Сентиер ман савниччĕ —
Çич ют килчĕ, уйăрчĕ.

Ку сăмахсем хыççăн чăнахах хыттăн йĕре пуçлать, юлташĕсем ăна пўртелле çавăтса илсе каяççĕ. Сентиер ним тума аптраса хурланса юлать.

Туй халăхĕ саланма пуçлать; пурте ўсĕр; хăшĕ лашасем патнелле утаççĕ, юрлакалаççĕ, хăшĕ çĕнĕ çынсем тухасса кĕтеççĕ.

Пинерпи ашшĕпе амăшĕ сăра куркисемпе пўрт умне ăсатма тухаççĕ. Пинерпи юлашки хут хăй çуралнă кил-çуртне асăнса пĕр ушкăн халăх умĕнче йĕрет.

Хĕр йĕрри сăмахĕсем

Ыр аттеçĕм-аннеçĕм,
Хапхăр умне юр çунă,

Кĕреçĕрпе хырмасан,
Шăпăрăрпа шăлмасан,
Хĕлле кайман шурă юр
Çулла та каймĕ терĕр-им?
Эй, аттеçĕм-аннеçĕм,
Кăçал паман пулсассăн,
Нумай çийĕ терĕр-им?
Çука юлăр терĕр-им?
Ах, аттеçĕм-аннеçĕм,
Эпĕ кунтан кайсассăн,
Пĕрре пĕçернĕ яшкăра
Иккĕ ларса çийĕр-ши?
Атте килĕ — вĕрене,
Вĕренсе çитнĕ кил-çуртчĕ:
Вĕренсе çитнĕ кил-çуртран
Епле тухса каям-ши?
Çичĕ ют килĕ — вĕрене мар,
Пĕр вĕренмен кил-çурта
Епле пырса кĕрем-ши?
Пĕр айккинче çĕр çырли,
Тепĕр айккинче хура çырла,
Ик еннелле сирĕлсе,
Мана кайма çул парăр.
Пăрăм-пăрăм çăра уççи,
Пĕр пăрăмĕ ытлашши,
Хĕр-тантăшсем хушшинче
Эпĕ пултăм ытлашши.

Юлашки сăмахсене куракансем еннелле пăхса хӳхлет, анчах хӳхлесе пĕтерейместь, хыттăн йĕрсе ярать. Вара Айтар енчи туй арăмĕсем Пинерпие юлташĕсенчен уйăрса çавăтса каяççĕ. Туй халăхĕ юрласа каять. Хыçалта шăнкăрав сассисем илтĕнеççĕ. Юлакансем хыттăн йĕреççĕ.

Сентиер *(вăрттăн)*. Улай килмерĕ, касаймарĕ пуль... Каяççĕ... Çук, ытла çăмăл, пĕр мăшкăлсăр илсе каять! Пинерпие памастăп! Пинерпи — манăн савни, çичĕ юта, вăрă-хураха памастăп!

Сентиер чупса кайма тăрать, анчах хыçалта юрлама чарăнаççĕ те, кăшкăрашнисем илтĕнме пуçлаççĕ.

Улай. Сентиер, пытан!
Сасăсем. Ав, авă, тытăр ăна!.. Ав, тарать!..

Улай урам урлă чупса каçса каять, анчах ăна хуса çитсе тытаççĕ.

А й т а р *(усаллăн кăшкăрса кĕрет, аллинче чĕн пушă)*. А-а!.. Эппин, Айтарăн чапне çапла пăсма шут тытнă... Юрĕ!.. Илсе килĕр ăна кунта... Ха-ха-ха! Çак çара çерçи манăн тăшман пулма шут тытнă. Ах, тăмсай! *(Пушшипе çапать.)*

У л а й. Кам курнă эп касние? Айăплине тупмасăр çынна хĕнеме юрамасть. Эп касман сирĕн сӳсмен пăявĕсене.

А й т а р. Эс мар-и? *(Çапать.)* Эппин, эс мар!.. Арча çинче ача ларнине курман-и эс, суккăр?.. Эс мар пулсан, кам каснă — кала ятне?

У л а й. Каламастăп.

А й т а р *(татах çапать)*. Эппин, каламастăн пулать?.. Айтара каламастăн?!

А й т а р ç ы н н и с е м. Хĕнес ăна!.. Вĕлерес!..

Чупса пыраççĕ.

С е н т и е р *(пытанса тăнă çĕртен сиксе тухать)*. Кам хĕнет айăпсăр çынна?.. Чарăнăр!

А х т у п а й *(хыпаланса малалла тухать)*. Э-э, айăпли тупăнчĕ хăех, кĕрӳ: пулсан, чăнахах та, çакă пулмалла, Улай мар.

С е н т и е р *(татса калать)*. Эпĕ!.. Хĕрне Айтара паратăп тесе, ялйыша хирĕç пырас терĕн-и? Юрĕ! Ахтупай çеç мар, пирĕн майлисем те тупăнĕç-ха. Халăх! Ăçта сирĕн намăс? Çак пĕр вăрă-хурахран хăратăр-и? Улăхсене тытса илет тесе, Айтарпа хурăнташлă пулас тетĕр-и? Мĕн пăхса тăратăр? Ун пек çынна вĕлерсен те çылăх пулас çук, май килнĕ чух тытăр!

Çамрăксем: «Тытă-ăр!» — тесе чупса пыраççĕ, ваттисем хăраса чакаççĕ.

А й т а р *(пистолетне хатĕрлесе тытать)*. Ха-ха-ха!.. А ну, кам килсе тытас тет — тыттăр! *(Кашкăр пек, йĕритавра пăхса тăрать.)* Мĕнрен хăратăр, кĕсел аврисем?.. Е Айтара тытма хăруша-и? Хе-хе-хе!

А х т у п а й. Ан çилленсем, кĕрӳ, каçар. Ку ачасене эпир халăх пуçтарса хĕнеттерĕпĕр.

А й т а р. Эсĕ тата; ватсупнă, хурăнташлă пулас тетĕн, ялйышна тытаймастăн! Кала, мĕнле каччă ку, Пинерпи тӳрри мар-и?

А х т у п а й. Çу-ук... Вăл ялти пуçтах ача, ун пеккине хĕр юрататъ-и?..

Сентиер. Суятăн, Ахтупай пичче, Пинерпи манăн савни, ăна эпĕ вăрă-хураха памастăп.

Айтар. Ав епле! Эсир пурте пĕр майлă-мĕн, мана шĕвĕртме шут тытнă. Эсир Айтар камне пĕлместĕр пулмалла. Юрĕ, курăр-ха, нумай кĕттермĕп. Эй, туй халăхĕ, илсе килĕр кунта çĕнĕ çынна!

Сентиер. Мĕн тăвасшăн эсир ăна? Тивтерместĕп! *(Хыçалтан чупма тăрать.)*

Айтар. Тытăр кăна та, ан ярăр!

Пинерпие çавăтса илсе килеççĕ.

Ахтупай. Ах, кĕрӳ, каçарсамах...

Айтар. Хамăн арăмпа хама ирĕк — сирĕн ĕç çук. Чим-ха, кил-ха кунта, «ар-рăм»! *(Пырса аллинчен тытать те, куçран пăхса, Сентиер çине кăтартса.)* Кала тĕрĕссипе: кам çак çын?

Пинерпи *(Сентиер çине пăхса)*. Тĕрĕссипе калатăп: ку çын — манăн савни. Ку пĕркенчĕк — манăн пĕтнĕ пуç! *(Пĕркенчĕкне Айтар çине ывăтать.)* Тӳрех калатăп, Айтар: эпĕ санпа пурăнмастăп. Вăрă-хурах патĕнче пĕтиччен, савнипе пĕрле пĕтем. *(Сентиере пырса ыталать.)*

Айтар. Ытла илемлĕн калаçатăн-çке эсĕ, çĕнĕ çын. Çук, Пинерпи, пĕркенчĕкне ывăтнипех Айтар аллинчен вĕçерĕнеймĕн: пурăнассипе вилесси санăн паянтан ман алăра. Эй, туй халăхĕ, кайса хупăр ăна кӳмене, ыран курăпăр: арăм пулать-и вăл ман е...

Халăх чупса пырса Пинерпие сĕтĕрсе илсе каясшăн: леш Сентиертен уйрăласшăн мар, вара мăн кĕрӳпе Итупай ирĕксĕр вĕçертеççĕ. Айтар табакеркине шаккакаласа уçса шăршлать.

Пинерпи. Сентиер!.. Сентиер... Сывă пул ĕмĕрлĕхе!.. *(Йĕрет, пĕркенчĕкпе хупласа çавăтса илсе каяççĕ.)*

Айтар. Ха-ха-ха! Çухăр, «хĕрĕм», çухăр! Тен, савни пырса ыранччен хăтарĕ. Ха-ха-ха! Ну, Ахтупай хуньăм, ытла та май çук сан хĕр. Тавтапуçах панăшăн. Сывă пулăр тепре куриччен. Хе-хе-хе! *(Кула-кула, табакне шăршлать те Сентиер çине тĕллесе калать.)* Апч-ху!.. Ан тытса тăрăр çавна, ярăр: пырса савнине ыталатăр. Хе-хе-хе!.. *(Кулкаласа уçать.)* Ну, туй халăх, юрлăр!

Савăнăçлă юрласа каяççĕ. Сентиер, хыçалтан чупса пырса, Айтара ярса илесшĕн, анчах Улай ăна чарать.

С е н т и е р. Ан чарăр мана. Хăвалăр хыçалтан, хăвалăр! *(Вĕçерĕнсе Айтар хыççăн чупать.)*

А й т а р *(пистолетне тĕллесе тытать)*. Мана хăвалама?!. Ме, шăршла Айтар табакне! *(Сентиере куçĕнчен табакпа сапать те хăвăрт каять.)*

С е н т и е р. А! Пинерпи, Пинерпи, сÿнчĕ маншăн çут тĕнче!

Хыттăн йĕрет, ун патне У л а й чупса пырать.

Ч а р ш а в

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ

Вăрманта, чўк тăвакан вырăнта. Хĕвелтухăç енчен сцена çине хĕрлĕ çутă ÿкет. Инçетрен туй юрри çывхарать. Лашасене чарнисем илтĕнеççĕ. Т у й  х а л ă х ĕ кĕрет. А й т а р ват юман умнерех тÿпене хăпарса тăрать. Юманăн турачĕсем çинче тĕрлĕ пир татăкĕсем çакăнса тăраççĕ.

А й т а р. Ну, ырă туй халăхĕ, хамăр çĕршыва çитрĕмĕр. Ĕлĕк пирĕн аттесем киремете пехиллемесĕр нихçан та ĕçкĕрен таврăнман. Çавăнпа, паянхи кун та киремете кÿрентерес мар, памаллине парас, тивĕçлине пиллес пуль тетĕп эпĕ.

С а с ă с е м. Кÿрентерес мар. Çиллентерес мар.

М ă н  к ĕ р ÿ, унпа пĕрле ватăраххисем малалла хĕвелтухăç еннелле пăхса пуçтарăнса тăраççĕ.

И т у п а й. Кăмăл тăвас пулать... Кÿрентерес мар.

М ă н  к ĕ р ÿ *(юман умне хăпарса, ÿсĕрскер, аллисене çÿлелле çĕклесе)*. Эй, пĕсмелле! Ырă киреметсем, ан пăрахăр, çырлаха хурăр. Утмăл çухрăм хура вăрман урлă, çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă илсе килчĕç пире урхамахсем тăван çĕршыва, пушăлла мар, туллипе. Вуник çÿпçе парнепе, ылтăн-кĕмĕл хушпупа, кĕмĕл-мерчен çипуçлă, хура куçлă кинпеле вĕçсе килтĕмĕр киле. Эй, ырă киреметсем! Айăп ан тăвăр пире: кунтан чипер кин тупаймарăмăр тĕнчипе; кунтан пуян хĕр тĕл пулаймарăмăр ялĕпе. Кĕтетĕр пуль, хапăл тăватăр пуль, тет-

пĕр, пирĕн парнесене илетĕр пуль, пирĕн кине йышăнатăр пуль, тетпĕр. Ырă хăта хисеплерĕ, пире ĕçтерсе çитерчĕ, сире те манмарĕ: хăпарту-кулач, хур аш парса ячĕ — çавсемпе сире чӳклетпĕр. Сывлăх парăр пирĕн кинпе кĕрĕве. Кил-çурт тулли йыш пулма, çак вăрман пек аслă пулма пехиллĕр, ырă киреметсем. Ырлăх парăр, çырлахăр пире, тайма пуçăм сире.

Ӳксе пуççапаççĕ те чăмлаксем пăрахаççĕ, мăн кĕрӳ, ӳсĕрскер, пуççапнă чух аран-аран пĕшкĕнкелет; унтан Пинерпие çĕлен çипсем, хăмач пирсем пăрахтараççĕ.

Тата пирĕн кин ваттисене хисеплесе парне парас тет: алшăллилĕх çĕлен çип, кĕпе-йĕмлĕх хăмач пир пиллес тет. *(Кайса çакать.)* Йышăнатăр пуль, эй, ырă аттесем? Пилленипе çитрĕ пуль, ытлашшине касарăр, çитменнине çитерĕр, ырă курăр çăтмахра, пирĕн кинпе кĕрĕве телей кӳрĕр пурнăçра. Тайма пуçăм сире.

Çĕнĕрен ӳксе пуççапаççĕ. Айтар, Итупай тата хăшĕ-пĕрисем, тĕне кĕнисем, сăхсăхаççĕ.

Айтар. Эй, ырă аттесем, эпир сире манмарăмăр, пире те малалла ан пăрахăр, пурнăçа ăнтарăр, тăшмансене пĕтерме пулăшăр. *(Сăхсăхса пуççапать те туй халăхне калать.)* Ну, туй халăхĕ, шăватпăр пуль малалла: авă хĕвел те епле илемлĕн хĕрелсе хăпарать. Тепĕр ушкăн хамăрăн ялйышпа юрласа савăнар. Айтар туйĕ — таврара пĕрре. Айтар ĕлĕкренпех хăватлă: уншăн пурнăçра чару çук, пурте ăна парăмлă. Çапла вĕт, туй халăхĕ?

Сасăсем: Тĕрĕс... Тĕрĕс...

Мăн кĕрӳ *(мухтанса)*. Ара, Айтартан пĕтĕм таврари чăвашсем хăраса тăраççĕ, пире телей кӳрекен — Айтар çеç.

Итупай. Айтар пурнăçĕ ăнса пытăр!

Айтар *(мухтанса)*. Айтар вăйлă!.. Айтар хăватлă!.. Айтартан сĕм вăрман та чĕтресе тăрать. *(Кăшкăрать.)* Ай-та-ар!..

Вăрманта «Айтар» тесе икĕ хут янăрани илтĕнет: малтан хытăрах, унтан хуллентерех; пурте шăппăн итлесе тăраççĕ.

Ха-ха-ха! Ав мĕн теççĕ мана çĕр çулхи юмансем, илтетни, Пинерпи?

Пинерпи чĕнмест.



«Айтар», Айтар — В. Родионов, Пинерпи — Н. Григорьева, 1966 ç.

Мĕн чĕнместĕн нимĕн те, е, хăранипе, чĕлхӳ çĕтрĕ-и? Ан хăра, арăм. Мана юраканĕ — манран хурлăх курас çук. *(Аллине Пинерпи хулпуççи çине хурать.)*

Çынсем хыçалалла утаççĕ.

Пинерпи *(вĕçерĕнсе)*. Хурлăх курас çук?!. Апла пулсан, мĕншĕн эсĕ пирĕн улăха çынсем хăвартăн?

Айтар. Унта сан ĕç çук. Айтар нихçан та, никамран та ниепле канаш ыйтмасть. Çавна пĕл малалла.

Пинерпи. Ăна пĕлме кирлĕ мар мана, мĕншĕн тесен эпĕ пурпĕр санпа пурăнас çук. Анчах мĕн тума çынсем хăварнине эпĕ лайăх пĕлетĕп: эсĕ пирĕн яла вут тĕртесшĕн, эсир калаçнине илтрĕм эпĕ.

Айтар. Ха-ха-ха! Хăш ялсем вара эсĕ апла? Қамăн арăмĕ?

Пинерпи. Сентиер савнийĕ.

Айтар. Сентиерĕн?! *(Хаяррăн.)* Ыран кирек камăн пул, анчах паян эсĕ манăн! *(Туртса илсе каясшăн.)*

Пинерпи туртăнса чĕркуççи çине ӳкет.

Пинерпи. Ыран?.. Ыранччен ăна вĕлереççĕ?!. Леш çынсем вĕлереççĕ?!. Чунсăр выльăх, ăçта сан чĕрӳ, ăçта этем чунĕ! *(Йывăç тункати çине выртса йĕрет.)* Сентиер, Сентиер!

Пичура хыçалтан вăрттăн сăнаса тăрать.

Айтар. Вĕлереççĕ... Ха-ха-ха! Йăнăшатăн, Пинерпи, Айтарăн пурнăçĕ çынна вĕлермесĕрех ăнса пырать.

Пинерпи. Апла пулсан, мĕн тума хăвартăн эсĕ тарçусене?

Айтар. Мĕн тума? Вăхăт çитсен пĕлĕн.

Пинерпи. Эсĕ суятăн. Вĕсем усал ĕç тума юлнă.

Айтар. Айтар суймасть — тӳррипе калать. Қам ун майлă — ăна вăл хисеплет, анчах унăн çулĕ урлă тăракана е хурлакана — каçару çук.

Пинерпи. Чунсăр этем! Санăн тарçусем ăна паян вĕлереççĕ. Сентиер, Сентиер! Санăн пуçна çиме çуратнă-ши мана аттепе анне... *(Қаска çине выртса хыттăн йĕрет.)*

Айтар. Ан ӳле, арăму-пуçу! Санăн тӳррине вĕлерсе эпĕ Айтар ятне çĕртместĕп. Айтар урăхла та тавăрма пĕлет.

П и н е р п и *(савăнса Айтара уринчен ыталать)*. Эппин, вĕлерместĕн?.. Тархаслатăп сана: вĕлерес пулсан — мана вĕлер, Сентиере ан пĕтер. Айтар, тĕрĕссипе калатăп: сана эпĕ пурпĕр юратас çук, çавăнпа, вĕлерес пулсан, çакăнтах вĕлер — аслă Киремете санран парне пулам е Сентиерпе пĕрле пулмалла ту. Эсĕ вăйлă, санăн яту чаплă — кирек ăçта та турă пӳрни тупăнĕ. Тархаслатăп сана, хĕрхенсем...

А й т а р. Юрĕ, хĕрхенем, савнипе тĕл пулмалла тăвам сана, анчах халь мар — каçхине, хĕвел анса ларсассăн, яла ыйхă пуссассăн.

П и н е р п и *(хăраса чакать)*. Мĕн тени пулать ку, мĕне пĕлтереççĕ ку хăрушă сăмахсем?

А й т а р. Мĕне пĕлтереççĕ? Акă мĕне: Айтар нихçан та çут хĕвеле хурлантармасть. Ав епле шăппăн вăранать манăн вăрман, аслă хĕвел те сăрт хыçĕнчен вăтанса çеç хăпарать. Айтарăн ăшри çил-тăвăл шурăмпуçпе лăпланать, анчах *(тискерленсе)* хĕвел анса ларсассăн — уншăн чару çук!

П и н е р п и. Каçхине... хĕвел анса ларсассăн... *(Шăппăн, чĕтресе.)* Паян каçхине пирĕн çамрăк ĕмĕр сӳнет... Ах, савни, мĕншĕн пĕрле вилме пӳлĕх хушман-ши пире? *(Йĕрет.)*

А й т а р. Ха-ха-ха! Пĕрле вилме? Ан хăра, Пинерпи, Айтар çынна вĕлермест, анчах мăшкăла тавăратех. Питех курассу килет пулсан, эпĕ сана çитес кунсенче савни патне илсе кайăп, анчах темĕн — юратăн-ши вара эсĕ ăна?

П и н е р п и *(савăнса)*. Çитес кунсенче?.. Тавтапуç сана, Айтар, хĕрхеннĕшĕн, эппин, эпĕ ăна çитес кунсенче куратăп.

А й т а р. Куратăн, куратăн. Анчах вăл сана курса ыталаймĕ. Хе-хе-хе!

П и н е р п и. Ах, Айтар, мĕншĕн эсĕ манран çаплах кулатăн, мĕншĕн суя сăмахсемпе ман чĕрене çиетĕн? *(Хыттăн выртса йĕрет.)*

А й т а р. Мĕншĕн тесессĕн — кулакантан Айтар хăй кулать. *(Ыталаса чуптăвасшăн.)*

Васкаса И т у п а й кĕрет.

И т у п а й. Айтар! Кăканар хĕрнелле темскерле юланут питĕ хытă чуптарса кайрĕ... Хыçран хăваласа килмеççĕ-ши?

Айтар (*сасартăк хаярланса*). Кам хăять Айтара хирĕç тăма!

Чупса тухса каяççĕ.

Пинерпи. Турăçăм!.. Пӳлĕхçĕм, пулăшсам пире, хĕрхенсем... Сентиерсем хыçалтан хăваласа килмеççĕ-ши? (*Чупкаласа айккинелле пăхкалать.*)

Пичура чупса тухать те вăрттăн Пинерпие пырса систерет.

Пичура. Васка, Пинерпи... Сан хыççăн хăваласа килнĕ Улая тытнă: тар хăвăртрах... кӳлĕ хĕрринчи чăтлăхра кĕт мана. (*Хăй хыпаланса тухса каять.*)

Пинерпи. Пӳлĕхçĕ!.. Мĕн тăвас?.. Чăнах калаĕши ку Айтар çынни?

Сасăсем çывхараççĕ.

Çывхараççĕ... (*Тарать.*)

Улая çавăтса килеççĕ.

Айтар (*пушăпа çапса*). Çыхăр лайăххрах!..

Пичура, хăвăрт чупса пырса, Улая вĕренпе çыхма пуçлать.

Пичура. Э-хе!.. Лекрĕн-и? Эсĕ мар-и-ха вăл сӳсмен пăявĕсене касаканни? Тӳрри хыççăн килтĕн-и?

Айтар. Миçен килнĕ эсир, кала? Ăçта юлташусем?

Улай. Пĕчченех... Пинерпи манăн савни: çамрăк пуçа çием те унтан уйрăлмастăп!

Айтар. Эппин, Пинерпи савниĕ эсĕ, леш суккăрланса юлни мар? Ак епле мана шăварнă эсир! Эй, ăçта Пинерпи, илсе килĕр кунта!

Мăн кĕрӳ (*хăраса ӳксе*). Ăçта?.. Ăçта Пинерпи?!.

Пурте чупкаласа шыраççĕ.

Ак инкек!..

Айтар. Кăвак сухал, ăçта тартнă эсĕ Пинерпие? Пуçна çапса çурам — тупнă пултăр халех!

Пурте шырама чупаççĕ; Айтар, çиллине шăнараймасăр, Улая çĕре çапса ӳкерет.

Пичура, асту куна лайăххрах, савнипе пĕрле йытта кă-

карнă пек сăнчăрлам. Çуралнăранпа курман намăса кăтартрĕç çак хура пўрт кăткисем. *(Васкаса тухса каять.)*

Пичура. Ёмĕр курман намăса пире те кăтартрĕç. Эх, этем кĕлетки! Хытăрах пăвса çыхам-ха сана! *(Мăйĕнчен пăвса çыхнă пек тăвать.)*

Мăн кĕрў *(тепĕр еннелле чупса иртсе кайнă чух)*. Ытлашши ан пăв, вилсе кайĕ тата. Ма мăйĕнчен çыхан? Кăшт пушат! *(Хыпаланса чупать.)*

Пичура. Вилмест... *(Йĕри-тавра пăхкаласа, вĕренне пушатать.)* Тар хăвăртрах! Пинерпи кўлĕ хĕрринчи чăтлăхра.

Улай. Кам эсĕ?

Пичура. Айтарăн тарçи... Чуп хăвăртрах!

Улай. Сана хăвна пĕтерессĕ вĕт капла?

Сасăсем çывхарассĕ, Пинерпи макăрни илтĕнет.

Пичура. Пинерпие тытнă авă, тар хăвăртрах! Пĕччен ăна çăлайрас çук, Айтара хирĕç ытларах халăха пăлхатас пулать. Чуп!..

Улайпа Пичура иккĕшĕ те чупса тухса каяççĕ. Пинерпие çавăтса кĕреççĕ.

Айтар *(сасартăк Пичурапа Улай çуккине асăрхать, пăрахса хăварнă вĕрен çыххине курать.)* Ку мĕне пĕлтерет? Ăçта Пичура?

Пурте шăпăрт пулаççĕ.

Чи шанчăклă вырăнта усранă Пичура мана хирĕç пулма шут тытнă-мĕн? *(Пауза. Айтар тункатa çине вăйсăрланса ларать те çемçен калать.)* Ярăр... Кирлĕ мар... Кайтăр çав хăйĕн савни патне.

Пурте тĕлĕнсе тăраççĕ.

Ну!.. Хе-хе-хе!.. Мăн кĕрў, чаплă-и Айтар туйĕ?

Мăн кĕрў. Ара... Капла, Айтар, мĕнле пулать-ха ку?.. Кунта çитиччен илсе килнĕ япалана епле каялла ярăн?.. Намăс!

Айтар *(хыттăнтарах)*. Ярăр, тетĕп. Кирлĕ мар, урăххине те тупăпăр.

Пинерпи *(чупса пырса)*. Тавтапуç сана, хăватлă Айтар.

Айтар (йăвашланнă пек). Хе-хе-хе!.. Хăватлă, эппин?.. Ну, каях... Аçталла каяс тетĕн, çавăнталла утчармастăп.

Пинерпи вырăнтан сикмесĕр тăрать.

Асатăттăм лашапах, анчах ху та пĕлетĕн: Айтаршăн ку намăс ытла та йывăр, пирĕн урхамахсем ку намăса «хăта килне çитереес çук»... Хе-хе-хе... Каях, мĕншĕн каймастăн?.. Е урăхла шухăш кĕре пуçларĕ-и?.. Тен, манăн ватăлнă пуçăма хĕрхенĕн?

Пинерпи, пуçне усса, ерипен йĕрсе утса каять.

Эх, мĕскĕн хĕрупраç. Хăйĕн телейĕнчен пăрăнать. *(Сасартăк чарăнусăр кулма пуçлать.)* Ха-ха-ха-ха-ха!.. *(Хăвăрт сиксе тăрса хыçĕнчен чупать.)* Çитет! Айтарăн хăвачĕ пĕтмен-халĕ, ку таранччен тăшман айне пулман... Халăх! Пирĕн киремет пысăк парне ыйтать, вăл парнене пирĕн кӳрес пулать! *(Пинерпие çавăтса кĕрет.)*

Пинерпи. А!.. Мĕн тăвасшăн эсир?.. Хĕрхенĕр çамрăк пуçа!.. Хĕрхенĕр!.. Хĕрхенĕр!

Айтар (*тискерленсе*). Çыхăр!.. Киремет парни пултăр... Çыхăр!.. Çыхăр!..

Мăн кĕрӳпе Итупай хыпаланса Пинерпие чӳк йывăççи çумне вĕренпе авраса çыхаççĕ, ыттисем тĕлĕнсе хытса тăраççĕ, Айтар пĕрехмай «çыхăр» тесе кăшкăрать.

Чаршав

## ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Сентиерĕн килĕ, хура пӳрт. Кăмака умĕнче хăйă çунать, путмар çинче Сентиер выртать. Урамра çил шавлани, аслати авăтни илтĕнет. Вăхăт-вăхăт çиçĕм çиçет.

Сентиер амăшĕ (*кĕрет те сăхманне хывать*). Ай-ай, тулта тĕттĕм те паян: те çумăр çăвас тет, çил арçури пекех шавлать. *(Сентиер патне утса пырса.)* Сентиер, тăрса уйран çимĕн-ши, паян кунĕпе пĕр çăвар та çимесĕр выртатăн-çке?

Сентиер чĕнмест.

Эй, çывăрать-мĕн... Апла пулсан, тивес мар пулĕ, канлĕ ыйхинчен вăратас мар... Ах, пӳлĕхçĕм, пĕртен-пĕр ывăла

та телей курма ӳстереймерӗм. *(Сӳнме пуҫланӑ хӑййа тӳрлетет, тулта ҫил улани илтӗнет.)* Ах, тур-тур... Ҫырлахсамах, хурлӑхлӑ чуна ан ҫӳҫентерсем.

Татах ҫил шавлани илтӗнет, унтан аслати авӑтать, ӑна илтсен, Сентиер сасартӑк вӑранать.

Сентиер. Ай, кам унта? *(Тӑрса ларать.)*
Амӑшӗ. Никам та ҫук, Сентиер, иксӗмӗр ҫеҫ.

Каллех аслати авӑтать.

Сентиер. Аслати авӑтать мар-и, анне?
Амӑшӗ. Ҫанталӑк пит усал: ҫумӑр пӗлӗчӗсем ним майӗ те ҫук чупаҫҫӗ, усал ҫил вӗрнипе пӳрт умӗнчи хурӑн та тӳсеймесӗр авӑнать, ҫиҫӗм ҫиҫнӗ чух хура пӗлӗтсем тискер кайӑксем пек анат еннелле шӑваҫҫӗ... Камӑн ҫылӑхӗ киремете кӳрентерчӗ-ши?
Сентиер. Ах, анне, эпӗ нимӗн те курмастӑп-ҫке.
Амӑшӗ. Ан хуйхӑр, ачам: юмӑҫ тӳрленет терӗ, анчах парни пысӑк кирлӗ терӗ. *(Шӑппӑнтарах.)* Айтарӑн пӳрт кӗтессине кайса кӗмӗл нухрат хӗстермелле терӗ.
Сентиер. Нухрат мар, унӑн чӗри тӗлне ҫивӗч ҫӗҫӗ тӑрӑнтармалла!

Ҫиҫӗм ҫиҫет.

Ай, анне, ҫиҫӗм ҫиҫмерӗ-и? *(Савӑннипе сиксе тӑрать.)*
Амӑшӗ. Ай, пӳлӗхҫӗм! *(Савӑнса.)* Куҫу уҫӑлчӗ-им, ывӑлӑм?
Сентиер. Анне, эпӗ ҫиҫӗм ҫиҫнине чиперех куртӑм. Ӑҫта шыв, ҫӑвам-ха — тен, сана та куракан пулӑп.
Амӑшӗ *(витре патне ҫавӑтса илсе каять).* Ах, ывӑлӑм, ҫу-ха, тен, чӑнахах уҫӑлӗ. *(Ывӑлӗн куҫне ҫӑвать, шӑпӑр витӗр шыв пӗрӗхсе.)* Ип пултӑр, сип пултӑр, вӗрни-сурни ҫак пултӑр, Сентиер куҫӗ уҫӑлтӑр. Тьфу-тьфу-тьфу!.. Сентиер пӳрӗ тасалтӑр, чичӗ ют куҫӗ хупӑнтӑр. Тьфу-тьфу-тьфу! Пӑсӑк пулсан — тӳрлентӗр, пӑснӑ пулсан — пӑсакана хӑйне пултӑр... Куҫ тухтӑр, куҫ тухтӑр — тасалтӑр, сирӗлтӗр... Тьфу-тьфу-тьфу!
Сентиер *(тӑрса кантӑк патнелле утать).* Ах, анне, курмастӑп-ҫке нимӗн те. Мӗншӗн тата ҫиҫӗм ҫиҫместши? Сӗмсӗр ҫил-тӑвӑл! Шавла, ула — эсӗ ман чуна хӑратас ҫук! Манӑн куҫсем курмаҫҫӗ пулсан та, ӑшри

вёри юн сивёнмен-ха, тăшмана тавăрма вăйлă аллăм пур!

Çиçĕм çиçет.

Ай!.. Анне, кала мана: çиçĕм çиçрĕ вĕт?! *(Кантăка уçса пăрахать.)*

А м ă ш ĕ. Çиçрĕ, ывăлăм, çиçрĕ — пехил турра. Сентиер, çиçĕм çиçнĕ чух кантăка уçсан аван мар, теççĕ те, ачам...

С е н т и е р *(кантăкран пăхса)*. Çук, анне, уçă вырттăр. Çиç тата, çиçĕм, çутат ман куçсене, усал тăшмана манран кулма ан пар!

Аслати авăтать.

А м ă ш ĕ *(кантăк патнелле пырса пăхать)*. Кун пек вăйлă çил-тăвăлра çумăр çусах каякан мар, пĕлĕтсем те сапаланса пĕтеççĕ пулас.

С е н т и е р. Ан сапаланчăр вĕсем: ман çиçĕм çиçнине курас килет. Анне, тухса пăх-ха тула: мĕн хăтланать унта çанталăк?

А м ă ш ĕ. Юрĕ, пăхăп. Эсĕ апатна ларса çи-ха, каллех сĕтел хушшинчен çимесĕрех тухрăн... Кил-ха, лар. *(Лартасшăн.)*

С е н т и е р. Çук, анне, ман çиес килмест... Савăннипе çиçĕм çиçнине çеç курас килет. Тухса пăх, анне, çĕрĕпе çиçĕм çиçес пулсан, çĕрĕпе кантăк умĕнче ларатăп.

А м ă ш ĕ. Ах, турă çак санпала... Тухса пăхам, эппин. *(Каять.)*

С е н т и е р *(пĕччен)*. Ах, çут тĕнче! Ĕмĕрлĕхех çухалтăн-ши эсĕ ман куç умĕнчен...

Çиçĕм çиçет.

Ав, çиçрĕ!.. Куртăм, куртăм!.. Ха-ха-ха!.. Куçран табакпа сапнипех эпĕ пĕтес çук — куракан пулатăпах. *(Хăйă çунакан çĕрелле хыпаласа утать.)* Ав, куратăп, тупата тур, куратăп... Ах, мăнтарăн хăй çути, эсĕ ман ĕмĕрте нихçан та паянхи пек илемлĕ çунса курман пуль... Епле эс илемлĕ! Е ман савни те паянхи пек нихçан та манăн чуна йăпатман-ши? *(Куçне шăлать.)* Ах, куççулĕ, хăçан эсĕ юхма чарăнăн-ши? Хăçан чирлĕ куçа уçăн-ши? Е ĕмĕрлĕхех савнине курмалла мар тăвасшăн-ши эсĕ мана? Çук, тӳрленет. *(Витрене хыпаласа тупса куçне çăвать.)*

Куççулĕ сахал пулсан, эп çăл шывĕпе çуса куç хупаххисене уçатăп. *(Çăварĕпе пĕрĕхсе çăвать.)* Куратăп, куратăп!.. *(Кантăк патнелле чупса пырать, лерен хĕрлĕ çутă ÿкет.)* Çиç, çиçĕм! Манăн ăшри асаплăха хăвăн хăватлă кăварупа çунтарса яр... Ха-ха-ха!.. Куратăп, куратăп, куратăп!

Сасартăк аякран сынсем кăшкăрашни илтĕнме пуçлать.

Ку мĕне пĕлтерет?.. Сасăсем?.. Мĕн пулнă?

Амăшĕ *(васкаса кĕрет)*. Ах, Сентиер, пĕтрĕмĕр...

Сентиер. Мĕн пулнă, анне?

Амăшĕ. Яла вут хыпса илнĕ. Малтан улăхри утă капанĕсем çунма пуçланă, теççĕ, унтан çилпе ял çине ÿкнĕ, теççĕ. Ăçта кайса кĕрĕпĕр, ывăлăм. *(Йĕрет.)*

Сентиер. Куна Айтар çыннисем тунă... Анне, çавăт мана!

Амăшĕ. Ăçта каяс тетĕн эсĕ курман куçупа?

Сентиер. Эпĕ, халăх умне тухса, Айтара хирĕç тăма чĕнетĕп... Инкек килсе çапмасăр пирĕн халăх ăса кĕмест çав!.. Айтар ĕçĕ ку. Пĕтĕм ялпа кайса Айтара пĕтерес пулать. Эпир ылханнине киремет илттĕр.

Тулта тата хытăрах шавлаççĕ.

Анне, çавăт мана.

Амăшĕ Сентиере çавăтать те, тухма тăраççĕ. Вĕсене хирĕç Улай чупса кĕрет, тулти сасăсем çывхарнăçемĕн çывхараççĕ.

Улай. Сентиер, ман ĕç тухмарĕ... Пытан ăçта та пулсан е тар хăвăртрах!

Сентиер *(сасартăк хăраса)*. Тар?! Мĕншĕн тарас ман?

Улай. Тар, унсăрăн пĕтетĕн: халăх сана вутта пăрахас тет.

Амăшĕ *(йĕре-йĕре калать)*. Турăçăм!.. Хăтарсам, çырлахсам!..

Сентиер. Вутта?! *(Чĕтресе.)* Мĕншĕн?

Улай. Ахтупай пичче халăха: Сентиер пирки пĕтетпĕр, тет. Вăл çиллентермен пулсан, Айтарпа тÿрĕ пурăнаттăмăр, тет. Васка! Атя, хам ертсе каям, анкартипе тарар.

Сентиер. Анне, эс юл: сана нимĕн те тăвас çук— эпир тарар. Пахчапа тарнине пире курас çук. Сывă пул,

ырă анне! *(Ыталать.)* Тавтапуç сана хисеплесе ÿстернĕшĕн.

Амăшĕ *(ыталаса)*. А!.. А!.. Ывăлăм... Юлашки хут ыталаса юлап пуль-ши сана?! *(Хыттăн йĕрет.)*

Улай *(чупса пырса)*. Çывхараççĕ... Васка, Сентиер!

Сентиер. Сывă пул, анне... Ан йĕр: вилмелле пулсан, пÿлĕх çапла çырнă пуль. *(Ыталать.)* Ну, çавăт, юлташ.

Каяççĕ; амăшĕ, хыçалтан сĕтĕрĕнсе пырса, чĕркуççи çине ÿксе юлать.

Амăшĕ. А-ах!.. ывăлăм!.. Çакна курма ÿстерсе çитĕнтертĕм-ши сана?

Сасăсем çывхараççĕ, хыçалта: «Ан чар, яр!» — тесе Сентиер кăшкăрни илтĕнет. Кăшт тăрсан, Улай Сентиере каялла çавăтса кĕрет.

Сентиер *(кăшкăрать)*. Ан чар, Улай, эп вĕсемпе хам калаçатăп: ман пурпĕр пĕтес пулать.

Улай. Çук, санăн тухма юрамасть: вĕсем курнăкурман чупса пырса ярса илĕç. Ахтупай пичче сан сăмахна итлес çук, халăх ун майлă. Тен, эп каланине итлĕç. *(Чупса тухса каять.)*

Сентиер. Улай, пĕрле тухар!

Амăшĕ *(Сентиере чарса)*. Сентиер, Сентиер... Халăх урсассăн, ăна чĕлхепе чарас çук! Ан тух — хĕрхен хăвна! Тен, Улая итлĕç.

Сентиер *(чĕркуçленсе ларса аллисене çÿлелле çĕклет)*. Эй, хăватлă киремет! Чăнахах эпĕ айăплă пулсан, вĕлер мана çакăнта! Тăшман вутĕнче çунса кайиччен анне килĕнче вилем!

Хыçалта халăх кăшкăрашать: «Вĕлерес, çунтарас, пĕтерес».

Амăшĕ. Ах, пĕтрĕмĕр... *(Ывăлне пырса ыталать.)* Пĕтрĕмĕр-çке, ывăлăм!

Сентиер *(сиксе тăрса)*. Çук!.. Сентиере тăшман айне пулма çуратман — пĕтес пулсан, хам алăран пĕтем! *(Сĕтел çинче çĕçĕ шырать.)*

Амăшĕ. Ах!.. Ывăлăм, мĕн тăвасшăн эсĕ? *(Чупса пырса çĕççе ярса илет.)*

Сентиер. Анне, хăвăн ывăлна юрататăн пулсассăн, хĕрхен мана — пар çĕççе.

Амăшĕ. Хĕрхенетĕп, ывăлăм, юрататăп, анчах чикĕнсе вилме памастăп.

Сентиер (*амӑшӗнчен ҫӗҫҫе туртса илесшӗн*). Анне, ан чар! Е саншӑн ывӑлу ҫунса асапланни авантарах-и?

Амӑшӗ. Ҫук, ывӑлӑм, пӗтес пулсан, пӗрле пӗтер, ҫӗҫҫе памастӑп.

Сасӑсем алӑк анинче ҫӗмӗрӗлеҫҫӗ.

Сентиер (*чӗркуҫленсе*). Анне, тархасласа ыйтатӑп: ҫӗҫҫе памастӑн пулсан, вӗлер мана ху; эсӗ мана ҫуратнӑ — эсех вӗлер!

Амӑшӗ. Мӗн калатӑн эсӗ, Сентиер... Ан кӳрентер турра!

Сентиер. Мана вӗлернӗшӗн мӗншӗн турӑ кӳрентӗр? Е асап курма ҫеҫ ҫуратнӑ-и вӑл мана? Кӳр, анне, ҫӗҫҫе!

Пырса амӑшне тытать, лешӗ памасть.

Амӑшӗ. Памастӑп, Сентиер.

Сентиер. Ан чар, анне... Кӗреҫҫӗ!..

Вӗсем тӗпӗртетнӗ вӑхӑтра Улай чупса кӗрет. Сентиер амӑшӗнчен ҫӗҫҫе туртса илсе чикӗнме аллине ҫӗкленӗ вӑхӑтра Улай пырса ярса илет.

Улай. Сентиер, мӗн тӑвасшӑн эсӗ? Хӑвна хӑравҫӑ вырӑнне хумастӑн пулсан — хирӗҫ тӑрар!

Сентиер. Халӑх урнӑ, вӗсене чарас ҫук.

Улай. Чараймасан — чараймастпӑр, анчах парӑнмастпӑр!.. Санӑн куҫ курмасть пулсан, манӑн курать — парӑнмастпӑр!

Халӑх ҫӗмӗрӗлсе кӗрет. Ахтупай малта. Хӑшӗ-пӗрисем ҫунса хуралнӑ рычагсемпе.

Ахтупай. Акӑ вӗсем иккӗш те — тытӑр!

Халӑх. Тытӑр!.. Ҫыхӑр!..

Сентиер. Халӑх!.. Ман куҫ витӗрех курмасть пулсан та, сире кам ертсе килнине пӗлетӗп. Ахтупай пичче, астӑватӑн-и мӗн каланӑччӗ эпӗ сана? Шӑпи ҫитсессӗн, ман алӑ та сан ҫине ҫӗкленӗ, тенӗччӗ. Суккӑр тунипе ҫитмерӗ, эсӗ татах, Айтар майлӑ пулса, манӑн чуна илесшӗн. Ҫук, Ахтупай, эсӗ мана чӗрӗлле вутта пӑрахас ҫук!

Ахтупай. Ах, суккӑрскер! Сан пирки пӗтӗм улӑхри утӑ ҫунса пӗтрӗ, халӑх выльӑхӗ выҫӑ тӑрса юлчӗ.

Сана çунтарма мар, чӗрӗлле çӑва шӑтӑкне ямалла! Халӑх, çыхӑр ӑна, илсе тухса çунтарӑр!

Х а л ӑ х. Тытӑр Улайне те... Çунтарас иккӗшне те.

С е н т и е р а м ӑ ш ӗ. Ырӑ ялйыш, ан тивӗрех ывӑла — хӗрхенӗр!

Ывӑлӗнчен хӑпмасть; Ахтупай Сентиер патне чупса пырать, анчах çав вӑхӑтра Улай çӗççине çӗклесе кӑшкӑрса ярать.

У л а й. Қам хӑять Сентиере тивме? *(Ахтупая чиксе пӑрахма тӑрать.)*

Халӑх хушшине сасартӑк П и ч у р а кӗрсе тӑрать.

П и ч у р а. Тӑвансем!.. Чарӑнӑр!..

Пурте сасартӑк лӑпланаççӗ.

Мӗн тӑватӑр эсир?

Х а л ӑ х. Мӗнле çын ку?.. Қам ку?

П и ч у р а. Эпӗ — Айтар çынни пулнӑскер, анчах паянтан, эсир çине тӑрсассӑн, унӑн чапӗ сӳнме пултарать. *(Ахтупая.)* Ахтупай хӑта, санӑн хӗрне, Пинерпие, Айтар вӑрманта йывӑç çумне кӑкарса усрать.

А х т у п а й *(кӑмӑлне йӑлтах тепӗр май çавӑрнипе)*. Вӑрманта?!. Йывӑç çумӗнче?!.

П и ч у р а. Хӑйне парӑнман çамрӑк арӑмне вӑрманта хурал тӑратса, апат çитермесӗр, шыв ӗçтермесӗр, выçӑ вӗлерме шут тытнӑ.

С е н т и е р. Илтетӗн-и, Ахтупай пичче? Хӗрне хӗрхенетӗн пулсассӑн, çавӑр халӑха тепӗр май!

У л а й. Сентиер мар санӑн тӑшману, Ахтупай пичче, вӑрӑ-хурах Айтар!

С е н т и е р. Айтартан савнине уйӑрмалӑх манӑн куç курать халӗ. Халӑх, атьӑр халех вӑрмана! Айтар кулли пулас мар. Тавӑрмалли вӑхӑт çитрӗ...Васкас!

П и ч у р а. Васкас!

У л а й. Атьӑр пурте!.. Тапранӑр!

А х т у п а й. Тӑвансем! Ан хӑварӑрах мана та, старике. Хӗре Айтар аллинчен хӑтарма пулӑшӑрах!

С а с ӑ с е м. Атьӑр, атьӑр!

Пурте васкаса тухса каяççӗ.

Ч а р ш а в

## ПИЛЛĔКМĔШ ПАЙĔ

3-мĕш пайĕнчи декорациех. Çĕрле. Аякран аслати авăтни илтĕнет, сайра хутра çиçĕм çиçет. Пинерпие йывăç çумне сыхнă. Иккĕн хурал тăраççĕ, вĕсенчен пĕри — Итупай. Вут умĕнче калаçса лараççĕ.

Ç а м р ă к  х у р а л ç ă. Çанталăк тискерленчĕ. Çумăр пĕлĕчĕсем хупăрланса киле пуçларĕç. Кун пек çанталăкра кунта ларма ырах мар вара.

И т у п а й. Эсир, çамрăксем, икĕ кaç хурал тăнипех ывăннă, эпир хамăр ĕмĕрте кун пек çĕрсем сахал курман... Çирĕм çул Айтарпа çӳресе, çӳç пĕрчисем те сахалланчĕç пуç çинче. Халь мĕншĕн пурăнас мар? «Кĕç пуçна çапса салатаççĕ»,— тесе хăрамалли çук. Айтарăн хăвачĕ пысăк, ун умĕнче пуçлăхсем те çĕлĕк илеççĕ. Иртнĕ çулхине астăвăр-ха: «Тетĕш тĕлĕнче улăхсем лайăх тесе калаççĕ, атьăр, ачасем, кайса пăхар» — терĕ те тепĕр уйăхран çирĕм çухрăм Атăл хĕррипе пурçăн пек улăха кастарса та илчĕ. Вырăс пуçлăхĕсем те çĕлĕкĕсене хывса пуçĕсене таяççĕ. Хура халăх, Айтар ятне илтсен, чĕтресе тăрать.

Ç а м р ă к  х у р а л ç ă. Чĕтремесен, эпир те кунта лармăттăмăр та...

И т у п а й. Шанчăкран тухмалла мар, итлес пулать: вара пурне те лайăх пулать. Пичура пек хăтлансан — пурнăç курас çук. Пурпĕрех Айтартан тарса хăтăлас çук.

Çиçĕм çиçсе аслати авăтса илет.

Ай, пӳлĕхçĕ, çырлахах... Çакăн пек тискер çĕр... çирĕм çул ĕлĕкрех пулнăччĕ... Аслатиллĕ-çиçĕмлĕ çĕре Айтар ырлăхлă çĕр тет. Çавăнпа вăл кирек мĕнле пысăк ĕçе те тĕттĕм пулсан тума тытăнать... Пĕр çирĕм çул ĕлĕкрех çакăн пек çĕрле — тискер çанталăкра — Айтарпа иксĕмĕр юланутпа Улатăра тухса кайрăмăр. Çурма çулта Михельсон полковник салтакĕсене тĕл пултăмăр... Ай-яй, хаяр полковник... Айтара тӳрех полковник патне илсе кайрĕç, эп лашасем патĕнче юлтăм... Нумай та вăхăт иртмерĕ, Михельсон полковник, Хусаналла кайма тухнă çын, Айтар сăмаххисене итлесе, Çĕрпӳпе Шупашкар çинелле хăйĕн çарне çавăрчĕ. Э-э-эх, юхрĕ те вара ун чухне халăх юнĕ. Шăп хам паллакан çынсенех, Айтар кăтартса панипе, тыта-тыта кайрĕç... Кайран... Э-эй, мĕн каласси пур вара: çавă кирлĕ пулнă та вĕсе-

не, çавна хăйсем шыранă та... Çавсенчен пĕри... çын илтмен чух калам-ха сана *(вăрттăнтарах)*: çак хальхи Сентиер ятлă ачан ашшех пулнăччĕ... Ăна эпĕ пит лайăх астăватăп.

Ç а м р ă к х у р а л ç ă. Сентиер ашшĕ?!

И т у п а й. Çавăччĕ... Çын юнне тăкмасăрах пуйман ĕнтĕ: ахальтен мар Кĕтерин патша та Айтара малтан сотник ятне пачĕ, кайран — улпута кăларчĕ. Унпа пĕрле эпир те чапра шутланатпăр... Э-э-эй, çавă кирлĕ пулнă та вĕсене. Вĕт, шухăшла-ха: Çĕрпӳ уесĕнче тăватă вырăс пачăшкăна, тĕне кĕнĕ чăваша, купцасене вĕлернĕ...

Шупашкар уесĕнче тата ытларах, тетчĕç: вуникĕ пачăшкăна, тияккăнсене пиллĕкĕшне тата ытти пысăкрах çынсене вĕлернĕ, тетчĕç... Ун пек иртĕнекенсене пĕтерме кирлех.

Ç а м р ă к х у р а л ç ă. Çавă кирлĕ те вĕсене.

И т у п а й. Камсене?

Ç а м р ă к х у р а л ç ă. Пачăшкăпа хăяккăнсене...

И т у п а й. Ай, ачам, мĕн калаçатăн эсĕ?

Çиçĕм çиçет, ун хыççăн аслати авăтать, Пинерпи пуçне çĕклет.

П и н е р п и *(йынăшать)*. А-ах... Тӳсме çук... Вăй пĕтрĕ.

Ç а м р ă к х у р а л ç ă. Итупай пичче, Пинерпи тăна кĕнĕ, темскер калать.

Иккĕш те итлеççĕ.

П и н е р п и. Сывлăш çитеймест, çăвар типрĕ. Пĕрех хутчен çумăр çутăрччĕ. Эй, пӳлĕхçĕ, мĕншĕн эпĕ çав тери телейсĕр-ши! Итупай пичче, ĕçтерсем пĕр сыпкăм шыв.

И т у п а й. Хушман, хĕрĕм, хуçаран иртме пултараймастăп.

П и н е р п и. Е сирĕн ăшра та пĕр тумлам этем юнĕ юлман-ши?.. *(Йĕрет.)*

Ç а м р ă к х у р а л ç ă. Итупай пичче, никам та пĕлес çук — ĕçтерер.

И т у п а й. Асту! Уй — куçлă, вăрман — хăлхаллă: çамрăк пуçна хĕрхен...

П и н е р п и. Юлашки çĕр... Тек эпĕ тӳсес çук... Хĕрхенĕр, тăвансем.

Ç а м р ă к х у р а л ç ă. Итупай пичче, эсĕ кирек мĕн ту, эпĕ курса йăлăхрăм... Хуть те Айтар хама кайран

выçă вĕлертĕр,— ĕçтеретĕпех. *(Шыв пуракне илсе кĕрет.)*

Итупай *(хыçалтан пырса тытать)*. Чарăн!.. Ăнран кайнă-и-мĕн эсĕ?..

Çамрăк хуралçă. Кирек мĕн пултăр, ĕçтеретĕп. *(Хăвăрт ĕçтерет)*.

Ерипен утса Айтар кĕрет, ăна курса Итупай ун патне чупса пырать те чĕркуçленсе пуç таять.

Итупай. Каçар ватсупнă тарçуна... Асапланать Пинерпи, тўсеймерĕмĕр — шыв ĕçтертĕмĕр.

Çамрăк хуралçă хăраса аяккалла каять.

Айтар *(йăвашшăн)*. Аван... Аван... Ăш хыпнă пулĕ Пинерпин. Ĕçтерĕр, ĕçтерĕр... Хырăмĕ те выçнă пулĕ. *(Пырса пуракран шыв ĕçтерет, лешсем тĕлĕнсе тăраççĕ.)*

Пинерпи. Тавтапуç сана, Айтар, çак хисепе тунăшăн.

Айтар. Итупай, лашасене пăхăр-ха... Пинерпипе эпĕ кунта пĕр-ик сăмах калаçам. Паянхи çĕр мана телей кўмелле, эс пĕлетĕн, Итупай.

Итупай. Кун пек çĕр Айтар çыннисемшĕн халиччен ăнăççăр пулман. Паян та кăвак хуппи пирĕн хисеплĕ йыш пуçне сыхлав кўтĕрччех. *(Пуç тайса тухса каять.)*

Çамрăк хуралçă *(кайнă чух)*. Пинерпие вĕлерме шут тытман-ши вăл, Итупай пичче? *(Çаврăнса пăхкаласа утать.)*

Итупай. Айтаршăн тĕттĕм çĕр яланах телейлĕ пулнă, çавăнпа вăл кунта та паянхи çĕр килсе тухнă. Васкар, каяр.

Çамрăк хуралçăпа Итупай каяççĕ.

Айтарпа Пинерпи иккĕшех. Пысăк пауза. Айтар Пинерпие йывăç çумĕнчен вĕçертет. Пинерпи, вăйсăрланнăскер, аран ура çинче тăрать; Айтар ăна çĕклесе тунката çине кайса лартать.

Айтар *(Пинерпи умне чĕркуçленсе ларса)*. Пинерпи... Пинерпи... Каçар мана, Пинерпи... Хĕрхенсем манăн ватăлнă пуçăма... Савнине юратнă пек мар, хĕрхенсе те пулин йăпат манăн чунăма.

Ыталать, Пинерпи хирĕçмест.

Пинерпи. Ах, Айтар, вăйăм çук... Манăн пуçăм çаврăнать...

Айтар *(тата ытларах йăвашланнă пек пулса)*. Пĕр сăмах çеç кала мана хĕрхенсе, мансам хăвăн савнине, хĕрхенсем, ватă аçу выранне хурса та пулин йăпатсам манăн чĕреме.

Пинерпи. Хĕрхенетĕп, Айтар... *(Макăрать.)*

Айтар *(сасартăк хавасланса ыталать)*. Хĕрхенетĕн, Пинерпи?! Мĕн илтетĕп: Пинерпи манăн, Пинерпи Айтарăн чапне пăсасшăн мар... Юрататăп сана, хĕрĕм. Аçу та, тусу та, савни те — пĕтĕм тĕнчипе те сана никам та манран ытла юратас та, савас та çук!

Аслати авăтать.

Авăт, кисрет, аслати! Сĕм вăрмана вăрат ыйхăран. Пурте илтчĕр: Айтаршăн чару çук, унăн чапĕ нихçан та сӳнес çук! Айтар вăйлă!.. Айтар хăватлă!.. Вĕçер, Пинерпи, çилçунатлă урхамахсемпе çĕнĕ çĕршыва!

Айтар Пинерпие çавăтса кайма тăнăччĕ кăна, вĕсене хирĕç васкасах Итупай чупса кĕрет.

Итупай. Айтар, Айтар, васкас пулать хăвăртрах: кунталла темскерле юланутсем нумайăн килеççĕ!

Айтар. Аçта?.. Камсем?..

Çамрăк хуралçă. Итупай пичче, тарар хăвăртрах, ырри пулас çук. *(Тухса каять.)*

Итупай. Айтар, эпир вĕсене çĕнес çук: вĕсем нумайăн, эпир виççĕнех... Тарас!

Айтар. Тарас?! Епле хăйса калатăн эс ку сăмаха? Тарас?! Айтар нихçан та тарса курман, ăна çĕнекен те ку таранччен никам та пулман. Хуть те шуйттансем килсе тухчăр — вырăнтан ан сикнĕ пултăр! Пĕтсен — Айтарпа пĕрле пĕтĕр!

Çамрăк хуралçă *(чупса кĕрет)*. Çитрĕç! *(Итупай хыçнелле кайса пытанать.)*

Пинерпи кĕтсе тăрать, Айтар та вырăнтан хускалмасть. Пичура, Сентиер, Улай тата ытти çамрăксем çĕмĕрсе килеççĕ.

Пичура. Акă вăл хăй те кунта.

Улай. Кунта!.. Часрах!..

Айтар. Авă кам ертсе килнĕ?.. Пичура!.. Час маннă-мĕн эс, Пичура, хуçун çăкăр-тăварне? Ну, мĕн кирлĕ-

ха сире, çамрăксене? Ĕçкĕ-и е урăх... *(Пистолетне аллипе хыпалать.)*

Сентиер. Эс манăн савнине выçă вĕлерме шут тытнă тенĕ сасă пур.

Айтар. Унпа сирĕн ĕç çук. Пинерпи мана пиллесе панă арăм, ирĕксĕр илмен. Выçăпа тутă пурăнасси — Пинерпин хăйĕн ирĕкĕ.

Пичура. Мĕншĕн эсĕ ăна йывăç çумне çыхса усратăн, мĕншĕн вăл çак тискер çĕрте, вăрманта? Эсĕ ăна вĕлерме шут тытнă!

Айтар *(кулса)*. Вĕлерме?! Ха-ха-ха!.. Ыйтăр хăйĕнчен, мĕн калĕ... Пинерпи, кала: савнипе шăтăк пӳрте кайăн-и пурăнма е Айтарпа пĕрле — вăл çамрăк арăмĕ валли юри хатĕрленĕ чаплă кил-çурта?

Пинерпие пырса хăрах аллипе ыталать, Пинерпи пуçне усса тăрать.

Сентиер. Пинерпи, санăн юратни икĕ куна та çитмерĕ-и? Е пуянлăх çав тери илĕртет-и?

Пинерпи чĕнмест. Айтар савăнса кулать, пурте Пинерпирен тĕлĕннĕ.

Улай. Ăна хĕнесе пистернĕ, çавăнпа вăл калама хăрать.

Айтар. Ыйтăр хăйĕнчен... *(Сасартăк кайма хатĕрленет.)* Эй, Итупай, çавăрса кил çилçунатсене!

Итупайпа çамрăк хуралçă каяççĕ.

Пинерпи, каяр. Мухтав киремете, кĕлтунипе çиттĕр. *(Пинерпие çавăтать.)*

Сентиер. Тăвансем, кун пек пусмăра тӳсме пултараймастпăр. Пирĕн улăх утине çунтаракан вăрă-хурахран, пĕччен çынтан хăрамалла-и пирĕн? Тапăнас! *(Айтар патнелле ыткăнать.)*

Халăх. Тапăнас!

Пинерпи *(сасартăк Сентиер патнелле чупса кайма тытăнать)*. Сентиер!.. Çăлсам мана!

Айтар *(хуса çитсе тытса)*. Манăн пулмасан, никамăн та ан пул! *(Çурăмĕнчен çĕçĕпе чиксе пăрахать.)* Халĕ ĕнтĕ — ытала хăвăн савнине. *(Хăвăрт тухса каять.)*

Сентиер *(Пинерпи умне чупса пырса чĕркуçленет)*. Пинерпи! *(Сиксе тăрса.)* Юн çине юн! Айтар-и, эп-и? Иксĕмĕртен пĕри пĕтес пулать! *(Хыçалтан чупать.)*

Улай. Ялйыш, пусмăр курнипе çиттĕр. Хăвалăр хыççăн!

Пурте Айтар хыççăн чупаççĕ.

Сцена хыçĕнче кăшкăрашнисем, пăшал сассисем илтĕнеççĕ. Айтар сцена варрине чупса тухать те пăшалне авăрласа тепĕр еннелле тарма хатĕрленет, анчах çав вăхăтра сасартăк Ахтупайпа ытти ватăраххисем çитсе хупăрлаççĕ; вара Айтар каялла тарма тăрать, анчах тепĕр хут Сентиерпе Улая тĕл пулать; пăшалне пеме ĕлкĕреймест.

Сентиер (*Айтар патнелле чупса пырса*). Киреметĕн парни Пинерпи мар, эсех пул! (*Айтара çĕçĕпе чиксе ӳкерет.*) Çакăнтан Айтарсен чапĕ сӳнтĕр!

Ахтупай. Тăвансем!.. Сентиер мар, эпĕ хам пулнă куççăр... Намăс!.. Намăс мана старике!

Сентиер (*хавассăн*). Пуçламăшне тунă — халĕ каяр малалла!

Пинерпи (*ерипен пуçне çĕклесе*). Сентиер...

Сентиер. Пинерпи!

Сентиерпе Ахтупай хавасланса Пинерпие пырса ыталаççĕ.

Çук, эпир пĕтместпĕр, Пинерпи!.. Çĕр çинче ирĕклĕ вырăн пурах!.. Хăтлăх пирĕн хамăр алăра!

Чаршав

Хусан, 1925 ç.